Чебоксарская Ц. Б. им. Горького 0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 11 ТУНТИКУН 83 (4896)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Суту-илÿ ĕçĕнче большевикла йĕркелĕх пулмала

Совет Союзĕнче социализм çĕнтерни ĕççыннисен пурнăçне пур йĕнчен те лайăхлатрĕ, вĕсен культурине çÿле çĕклерĕ. Халăх дохочĕ ÿснĕ, ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнă май вĕсем тавар илесси çулран çул ÿссе пырать. Чăваш республикĕнче потребсоюз çистеми 1932 çулта ваккăн 32 мĕлйун тенкĕлĕх тавар сутнă пулсан, 1937 çулта 150 мĕлйун тенкĕлĕх сутнă. Пĕтĕм суту-илÿ çиçтемин 1937 çулти таварçаврăнăшĕ 281 мĕлйун тенкĕлĕх пулнă. Ĕççыннисем сахăр, канфеткă, пулă, çу, ата-пушмак тата тĕрлĕрен культурлă таварсем илесси ÿснĕ-çемĕн ÿссех пырать. Çакна уççăн кăтартса паракан хăшпĕр цифăрсем. 1936 çулта Чăваш республикĕнче 28112 центнĕр сахăр, 20085 центнĕр канфеткă, 13956 центнĕр пулă, 273,5 центнĕр çу сутнă пулсан, 1937 çулта 42267 центнĕр сахăр, 29379 центнĕр канфеткă, 14841 центнĕр пулă, 933,4 центнĕр çу сутнă. Ку çеç мар. Йалта культурлă таварсем: патефон, радиоприйомник, велосипед, сехет, музыкă инструменчĕсем 1936 çулта 990 пин тенкĕлĕх сутнă пулсан, иртнĕ çулта 1.597 пин тенкĕлĕх сутнă. Çавнашкалах сĕтел пукан, ата-пушмак, çĕленĕ кĕпесемпе тумтирсем сутасси те хăвăрт ÿссе пырать.

Çапла ĕнтĕ суту-илÿ тăвасси пур çĕрте те анлăн саралса пырать. 1938 çулхи таварçаврăнăш планĕ 321 мĕлйун тенкĕлĕх пулмала. Каçал хулара та, йалта та мануфактура, çĕленĕ кĕпесемпе тумтирсем, тутăрсем, апат-çимĕç тата ытти таварсем сутасси иртнĕ çулхинчен нумай ÿсет.

Çапла пулин те, пирĕн республикăра суту-илÿ ĕçĕ халăх хуçалăхĕн пĕтĕм ÿсĕмĕнчен нумай кайа йулса пырать. Суту-илÿ организацийĕсем, чи малтан Суту-илÿ халăх комиссариачĕ, Чăвашторг, Чăвашсойуз тата вĕсен районсенчи оргăнĕсем суту-илÿ ĕçĕнче сăтăрçăсен, халăх тăшманĕсен, троцкиссемпе бухаринĕçсен, буржуалă националиссен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе халĕ те большевикла тимлĕхпе ĕçлеме тытăнман-ха. Суту-илÿ организацийĕсем начар ĕçленĕ пирки, 1937 çулта тата 1938 çулти пĕрремĕш кварталра таварçаврăнăш планне 15 мĕлйун тенкĕлĕх тултарса çитĕреймен. Çакна пула ĕççыннисем хăйсене кирлĕ таварсене 15 мĕлйун тенкĕлĕх илеймен.

Апрелĕн 7—8-мĕшĕсенче республикăри суту-илÿ ĕçĕнчи активăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта магазинсенче, лавкасенче, базăсенче, столовăйсенче ĕçлекен стаханăвĕçсемпе ударниксем пулчĕç. Вĕсем суту-илÿ ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕç, çитес вăхăтра тумали пысăк ĕçсене кăларса тăратрĕç.

Суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх—вăл растратă, пурлăха çаратса пĕтерни, хуçалăха йапăх тыткалани, учотпа отчот ĕçне арпаштарса йани, пуринчен ытла кадрсем çине тимсĕр пăхни пулать. Çакна пула Чăвашторг çиçтеминче иртнĕ çулта пĕр мĕлйун тенкĕ растратă пулнă, 864 пин тенкĕ убыткă тÿснĕ. Ытлашши расхутсем те мĕлйуншар тенкĕпе шутланаççĕ. Чăвашсойуз çиçтеминче растратăсемпе çаратусем питĕ пысăк. Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн умма растратăсене тĕп тăвас ыйту; жуликсемпе вăрăсене, йапăх ĕçлекенсене суту-илÿ организацисенчен кăларса сирпĕтес, вĕсен вырăнне шанчăклă çынсене лартас ыйту нихăçанхинчен çивĕч тухса тăрать. Тавар хуçалăхĕ, укçа-тенкĕ хуçалăхĕ, учотпа отчот, контроль, тĕрĕслÿ кашни магазинра, кашни лавкара, кашни йалпора—пур çĕрте те çирĕп пулмала.

Суту-илÿ ĕçĕнче тÿрĕ, халăхшăн тăрăшса ĕçлекен работниксем те сахал мар. Вĕсем растратă тумаççĕ, государствă пурлăхне çаратмаççĕ, пурлăха тирпейлĕ тыткалаççĕ, тавар илекенсемпе кăмăллă калаçаççĕ, вĕсене йурăхлă тавар илме сĕнеççĕ, илнĕ таварпа мĕнле усă курма канаш параççĕ т. ыт. те. Анчах та суту-илÿ организацисене йертсĕ пыракансем вĕсен примерĕсене сармаççĕ, кайа йулакансене, халлĕхе начар ĕçлекенсене лайăх ĕçлеме вĕрентмеççĕ. Çавăн пекех ÿссĕ пыракан шанчăклă, пултарулă кадрсене йертсе пырас ĕçе хăйулăн лартмаççĕ, лартнисене те ĕçпе пулăшмаççĕ.

Çакна ăнлама вăхăт: суту-илÿ организацисем лайăх ĕçлеччĕр, вĕсенче растратăсемпе çаратусем ан пулччăр, ĕçхалăх ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртчĕр тесен, стаханăвĕçсене, ударниксене, кооперации обшчественăçне пĕтĕм ĕççыннисене партипе правительствă суту-илÿ организацийĕсем умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртме мобилизацилемеле.

Сăтăрçăсем, троцкиссемпе-бухаринĕçсем „пирĕн тавар çук, промышленнăç тавар кăларма пултараймасть“ тесе суйа хыпар сарнă, суту-илÿ ĕçĕнче ĕçлекенсем çак сийенлĕ шухăша çапса хуçас тĕлĕшпе халĕ те начар ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем суту-илÿ тума кирлĕ таран тавар илсе килес, пур таварсене те хăвăртрах вырăнсене çитерес, вырăнти таварсемпе лайăх суту-илÿ тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Акă хамăр республикăри Чăвашпромсойузпа Техжирпром текен организацисене илĕпĕр. Вĕсен çуркунне тĕлне урапана сĕрмели маç, ут таврашсем т. ыт. йапаласем нумай туса кăлармала пулнă. Анчах вĕсем хăйсен планне тултарайман, суту-илÿ организацисемпе тунă договăрсене пурнăçа кĕртмен. Çакă ĕнтĕ суту-илÿ ĕçне лайăх организацилеме чăрмантарни пулать.

Ĕçхалăхне кирлĕ таварсем тăратас ĕçре вырăнти промышленнăç, аласта кооперацийĕ, инвалидсен кооперативĕ пысăк вырăнта тăраççĕ. Вĕсен те хăйсен ĕçне ĕçхалăхĕ ыйтакан ыйтусене пурнăçлас йенне çавăрмала.

Промышленнăçран тавар илсе килсе, ăна магазинсемпе лавкасем тăрăх валеççе çеç ларни суту-илÿ ĕçне большевикла организацилени пулмасть. Суту-илÿ организацийĕсен тавар илекенсен интересне шута илсе промышленнăçа нумай суртлă тата паха таварсем туса кăларма ыйтмала. Сутма йурăхсăр тавар магазина пырса кĕмеле мар. Çапла пулин те, пирĕн магазинсенче халĕ витмен таварсем темĕн чухлех, вĕсем пăсăлнă, пахалăхĕ начар.

Совет суту-илÿ умне питĕ пысăк задачăсем лартнă. Вĕсем йалтах пирĕн партипе совет влаçĕ ĕççыннисен пурнăçне малала лайăхлатса пырассишĕн сталинла тăрăшнинчен тухса тăраççĕ. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ совет суту-илÿне пур йенĕпе те анлăн сарса пыма кирли çинчен пирĕн партипе совет организацисем умне татăклă задачăсем кăларса тăратать. Партипе совет организацийĕсен, чи малтан суту-илÿ организацийĕсен хăйсен революцилĕ сыхăлăхне хăпартсан, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма чăрмантаракан тăшмансене тымарĕпех кăклаcа пĕтермеле, суту-илÿ ĕçĕ халăх хуçалăхĕн пĕтĕм ÿсĕмĕнчен йулса пынине пĕтерсе, ăна малти рете кăлармала.

Чăваш республикĕнчи Совет суту-илÿвĕнче ĕçлекенсене пурне те

Совет суту-илÿвĕнчи актив канашлăвĕ чĕнсе калани

Йулташсем! Çĕршыва сталинла индустриализациленĕ, йалхуçалăхне коллективланă никĕс çинче халăх дохочĕ, ĕçхалăхĕ таварсем илесси, çĕршывăн таварçаврăнăшĕ пысăккăн ÿсрĕç. Патша саманинче пусмăрта пулнă, халĕ ирĕке тухнă Чăваш республикĕ СССР Союзĕнчи социализм строительствине активлăн хутшăнса ĕçлет, вăл ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни тăрăх, малта пыракан, орденлă республикă пулса тăчĕ.

Анчах, Чăваш АССР-че таварçаврăнăшĕ халăх хуçалăхĕн пĕтĕм ÿсĕмĕнчен пит кайа йулса пырать. Çакăн пек кайа йулни вăл республикăри суту-илÿ организацийĕсем начар ĕçленинчен килет. Таварсене çаратнисене, растратăсене халĕ те пĕтерменни, çакăрпа сутă тăвассине йĕркелеменни, ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсемпе сутă тăвассинчи пысăк çитменлĕхсем—пирĕншĕн пит намăслăскерсем пулса тăраççĕ.

Суту-илÿ оргăнĕсене кĕрсе кайнă халăх тăшманĕсем: троцкиссем, бухаринĕçсем, буржуалă националиссем ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсене тăратассине йапăхтарса, государствăна тата совет суту-илÿне пысăк сийен кÿнĕ. Вĕсем учотпа отчот ĕçне пăтраштарса государствă укçи-тенкине, пурлăхне çаратса пĕтерессине организациленĕ, суту-илÿ организацисен финанс хуçалăхне хавшатнă, аркатнă. Анчах сталинла Халăх Комиссарĕ Н. И. Йежов йулташ йертсе пыракан наркомвнуделĕçсем хамăрăн тăван çĕршыври халăх массисем активлă пулăшнипе, пирĕн ленинла-сталинла партин Тĕпкомĕ йертсе пынипе тăшмансене преступленин тунă çĕрте тытса Совет сучĕн аллине пачĕç. Совет сучĕ тăшмансене тивĕçлипе айăпласа тĕрĕс те хайар пригăвăр йышăнчĕ. Çав пригăвăр—пĕтĕм совет халăхĕн пригăварĕ пулса тăрать.

Совет суту-илÿвĕнчи работниксен тăван çĕршывăн ĕççыннисем умĕнче хăйсем мĕнле пысăк ответлă пулнине туйса илмеле, халăхăн ÿссе пыракан культурăлă тата йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртме мĕн кирлисене пурне те тумала, тавар илекенсен ыйтăвĕсене ĕçе кĕртме çĕнĕ формăсем тупмала, партипе правительствă таварçаврăнăшĕ тĕлĕшпе панă хушусене пурнăçа кĕртессишĕн куллен кĕрешмеле. Чăваш республикĕнчи суту-илÿ ĕçĕнче малта пыракан, тÿрĕ те тăрăшса ĕçлекен работниксем сахал мар. Акă вĕсем:

Шупашкар хулинчи 6 мĕш номĕрлĕ магазин пуçлăхĕ **Андрей Илйин** йулташ. Вăл 1931 çултанпа ĕçлет, таварçаврăнăш планне çулран çулах иртерсе тултарса пырать. Унăн магазинĕ плана 1936 çулта 111 процент, 1937 çулта 121 процент, 1938 çулти пĕрремĕш кварталта 108 процент тултарнă. Магазинра растратă, çаратса пĕтерни перре те пулман. Магазинра ĕçлекенсем пурте социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Денисăв йулташ Çийавă йалпо председателĕ, вăл йертсе пыракан йалти кооператив 1937 çулта таварçаврăнăш планне 116 процент тултарнă. Йулашки виçĕ çул хушшинче йалпора пĕр растратă та, пĕр çарату та пулман. Укçа-тенкĕ шыраса илмелисене шыраса илсе пĕтернĕ, йалпо тупăш парать.

Терентйĕв йулташ—Вăрмар йалпо председателĕ, 1937 çулхи таварçаврăнăш планне 109 процент тултарнă. Укçа-тенкĕ шыраса илмелисене илсе пĕтернĕ, 1937 çулта йалпо 22.221 тенкĕ услам илнĕ.

Иванов йулташ—Чебторгри продавец, 1935 çултанпа ĕçлет, унăн растратă çук, 1937 çулхи таварçаврăнăш планне иртерсе тултарнă, 1938 çулхи пĕрремĕш кварталл планне 182 процент тултарнă.

Йелизарăвă йулташ—Шупашкар хулинчи „Бакалей“ магазинĕнчи тавар сутакан. 1937 çулччен уборшчицăра ĕçленĕ, 1937 çулта хăйĕн планне иртерсе тултарнă, 1938 çулхи пĕрремĕш квартăл планне 101 процент тултарнă.

Алексей Малышĕв йулташ—Шупашкарти кĕнеке магазинĕнче 10 çул хушши ĕçлет. Кĕнеке суту-илÿвĕнче пурĕ 21 çул хушши ĕçлет. Вăл плана кашни уйăхрах 115 процентран кайа мар тултарать. Митингсем тата демонстрацисем вăхăтĕнче кĕнекесем сутассине лайăх организацилет. Çапла, 1937 çулти нойаберĕн 7-мĕшĕнче вăл 1000 кĕнеке ытла сутнă. Çуллахи вăхăтра Малышĕв йулташ кĕнекесене йала çитерес тĕлĕшпе ĕçлет, колхозсенче кĕнекесем, журналсем сутас ĕçе организацилет. Малышĕв йулташăн хăй ĕçлеме пуçланăранпа пĕрре те растратă пулман.

Ф. И. Алексейĕв йулташ—Шупашкарти „Сангигиена“ магазинăн пуçлăхĕ. Вăл çак магазинра 10 çул ĕçлет, 10 çул хушшинче унăн пĕр растратă та пулман. Магазин 1937 çулхи плана нойаберĕн 10-мĕшĕ тĕлне 112 процент тултарнă.

Суту-илÿ ĕçне йертсе пыраканăн задачи лавкасенче, магазинсенче ĕçлекенсем хушшинче кашни кун ĕçлесси, вĕсемшĕн тăрăшасси пулать, çапла майпа стаханăвла йухăма сармала.

Правительствă Чăваш республикĕ валли 1938 çулхи таварçаврăнăш планне 321 мĕлйун тенкĕ çирĕплетнине епĕр чи пĕчĕк тесе шутлатпăр.

Совет суту-илÿвĕнчи стаханăвĕçсен, активăн канашлăвĕнче суту-илÿ организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене уçса палăртрĕç, чи кĕске вăхăтра татса памали кирлĕ задачăсене кăларса тăратрĕç. Чăваш АССР правительстви çирĕплетнĕ таварçаврăнăш планне тултарас тĕлĕшпе епĕр, Чăваш АССР суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн активне пуçтараннисем, хамăр çине çак обйазательствăсене илетпĕр:

1. Суту-илÿ организацисене халăх тăшманĕсем кĕрсе кайассине хирĕç, сăтăрçăсене, жулĕксене, вăрăсене, çапкаланчăксене хирĕç хайаррăн кĕрешсе, сăтăрлă ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтермеле. Суту-илÿ ĕçĕнче растратă тăвассине, таварсене пăсассине пĕтеретпĕр. Тÿрĕ ĕçлесси пирĕн тасa обйазăннăç пулать.

2. Таварсене тăккалассипе усăсăр расхутсене хирĕç кĕрешмеле, таварсене кÿрсе килес ĕçре ытлашши расхутсем тумала мар.

3. Пĕрле апатланас ĕçри работниксем ĕççыннисемшĕн тăрăшса, культурлă ĕçлеме, кухньăсенчен апат-çимĕç пĕçерсе кăларассине нумайлатма пулаççĕ.

4. Нимĕн тытăнса тăмасăр сутă тăвас, таварсен суртне нумайлатас тĕлĕшпе планпа палăртман çимĕçсене, таварсене хатĕрлессине сармала, суту-илÿ тума нумай суртлă таварсем памала, вырăнти производствăн продукцине ытларах хутшăнтармала.

5. Базăсене, суту-илÿ организацисене магазинсемпе лавкасене пĕрмайах запас тавар тăратма, таварсен пахалăхне лайăхлатма, таварсен суртне нумайлатма хушас.

6. Суту-илÿ ĕçне сармали тата ĕçхалăхне таварсем, çимĕçсем тăратмали майсенчен пĕри колхозлă суту-илÿ пулнине палăртса, канашлу суту-илÿ организацисен руководителĕсене пурне те 1938 çулта рынăксемпе пасарсенче лавçинче сутă тăвассине йĕркелеме, вĕсенче ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ тума хушас.

7. Сахал турттарса, сахал виçсе парассине хирĕç хытă кĕрешмеле. Магазинсенче, лавкасенче, киосксенче, павильонсенче, столовăйсенче, буфетсенче ĕççыннисем ыйтни çине культурлă пăхмала.

8. Кĕске срукра техникăла вĕренÿ ĕçне сармала, ĕçĕн çĕнĕ метăчĕсене пурнăçа кĕртмеле, суту-илÿ ĕçĕнчи кадрсене пĕрмайах вĕрентсе хатĕрлемеле, шанчăклисене, пултараканнисене йертсе пырас ĕçе хăйулăн лартмала, вĕсене ĕçпе пулăшмала.

9. Канашлу, партипе правительствă тата халăх суту-илÿ ĕçĕнчи работниксем çине политикăла пит кирлĕ те пысăк задачă хунине паллă туса, магазинсемпе лавкасенче, столовăйсенче ĕçлекенсем халăх ĕçне тунине ăнланса, 1938 çулхи тавар çаврăнăшне ытлашшипех тултарма кирлĕ ĕçсене пурне те тумала, тесе шутлать.

Совет суту-илÿвĕ умне пит те пысăк задачăсем лартнă. Революцилĕ сыхăлăха хăпартса суту-илÿ организацисене хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсене нимĕн хăварми тăпăлтарса, суту-илÿ, пĕрле апатланас ĕçĕн предприйатисенче ĕçлекенсен пилĕк пинлĕ çарĕ совет суту-илÿвĕ кайа йулса пынине пĕтермеле, ăна Чăваш республикĕн халăх хуçалăхĕн малта пыракан участки туса хумала.

Совет суту-илÿ ĕçĕнчи актив канашлăвĕ.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Китайри вăрçă

Хăйсене Тайерчжуан патĕнче (Çурçĕр Китай) çĕмĕрсе такнă хыççăн, Йапони çарĕсем васкасах çурçĕрелле чакса кайаççĕ. Вĕсем артиллерине тата вăрçă хатĕрĕсене пăрахса хăвараççĕ. Китай çарĕсем вĕсен çулне малала чакма пÿлсе лартнă.

Тайерчжуан патĕнчи çапăçусенче Китай çарĕсем 500 йапонĕçа тыткăна илнĕ.

Англи пичечĕ паллă тунă тăрăх, Китай çарĕсене Тайерчжуан районĕнче çĕнтерÿ тума çаксем пулăшнă: çарта дисциплинă лайăхланни, полевой тупăсен хисепĕ чылай нумайланни, çĕнĕрен вĕрентнĕ „студентсен çарĕсен“ çапăçу пахалăхĕсем лайăххи (вăл çарсем çак çапăçусене пĕрремĕш хут хутшăннă), Китай партизанĕсем Йапони çарĕсене хытă çĕмĕрни. Йут çĕршыв хаçачĕсем çавăн пекех тата Китай çарĕсен моралĕ çирĕплĕхне палăртаççĕ.

Хенань провинцин çурçĕр пайĕнче Венçань таврашĕнче Йапони çарĕсем мĕн пур йалсене вут тĕртсе çунтарса йанă тата партизансемпе çыхăннă тесе 100 хресчене ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Центрти фронтра Китай çарĕсем халь те Фуйан хулишĕн çапăçаççĕ. Йулашки кунсенче çав хула таврашĕнче çапăçнă чухне йапонĕçсем икĕ пин çынна çити çухатнă. Китай çарĕсемпе партизансем халь те Ханчжоу хули çине тапăнса пыраççĕ. Йапонĕçсем Ханчжоу патне 20.000 салтака йахăн йанă.

(ТАСС).

РЕСПУБЛИКАЛА ИСПАНИРЕ

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Кампесино генерал бойецсемпе калаçать.

(Союзфото).

Австрири гитлĕрла террор

ПРАГĂ, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Австрире политикăлă дейател пулнисенчен пĕри Венă тĕрминчен Чехословакине тарса пынă, вăл Австрире арĕсленĕ пиншер çынсен пурнăçĕ çинчен каласа кăтартнă.

Венăри мĕн пур тĕрмесемпе судчен хупса лартмали çуртсем йăлтах тулса ларнă. Политикă ĕçĕпе айăпланнă çынсене хупмали Венăри тĕрмере хальхи вăхăтра ларакансем, Австрине Германи фашисĕсем туртса илечченхипе танлаштарсан, пилĕк хут нумайрах. Пĕччен лармали камĕрăсене 7—8 çын хупнă. Кашни сакăр çын пуçне уламран тунă пĕр матрац тата виçĕ тасамар утийал çеç параççĕ. Хупса лартнисенчен нумайĕшĕсем ларсах çывăраççĕ.

Фашиссем çĕрле хĕрарăмсем ларакан камĕрăсене тапăнса кĕреççĕ те, тĕрмене лартнă хĕрарăмсенчен мăшкăлаççĕ.

Тĕрмере ларакансене нумайăшне ĕçленĕ çĕртенех арĕслесе илсе кайнă пулнă, тата вĕсем хăйсем ăçта пурăнни çинчен çемйисене пĕлтерме пултараймаççĕ. Тăванĕсемпе курнăçса калаçма ирĕк памаççĕ. Хальхи вăхăтра Австри тĕрмисенче пуринче те çавăн пек йĕрке туса хунă.

Негрин чĕнсе калани

БАРÇЕЛОНА, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Республикăн мĕн пур хĕçпăшаллă вăйĕсене йертсе пырассине хăй çине илсе, министрсен Совечĕн председателĕ тата оборонă министрĕ Негрин халăх çарне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Негрин республикă çарĕн мĕн пур командирĕсене пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вĕсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр хăйулăн çапăçнин теслĕхне кăтартса памала, тесе астутарать.

Министрсен Совечĕн председателĕ Негрин бойецсене çакăн пек чĕнсе каланă: „Республикă шанса тăратнă постран вĕсене вилĕм çеç илме пултарать... Есĕр пайан хĕн-хур тÿсни ыран çĕнтерÿ кÿрет. Епĕр çĕнтерессине епĕ те сирĕн пекех çирĕппĕн шанатăп. Çакна тума пĕр йапала çеç пур—хирĕç тăрас пулать“.

—o—

Пăлхавçăсене хирĕç кĕрешме

Фронт валли 100 пин доброволĕц тата укрепленисен строительстви валли 50 пин рабочи пухас ĕç пĕтĕм республикăлă Испани тăрăх ăнăçлăн саралса пырать.

Халăх хăйĕн пĕтĕм вăйне пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç кĕрешме мобилизацилет.

Каталонири вăтам шкулсенчи студентсемпе учителсен делегацийĕ хăйсен вăйне республикăна хÿтленĕ çĕре пама пулса правительствă патне сĕнÿ йанă.

Каталонири рабочи пишчевиксем ернере 60 сехет ĕçлеме тата хăйсен союзĕн членĕсене пурне те—малтан çарта пулнисене—талăк хушшинче фронта мобилизацилеме постановлени йышăннă.

Прат де Льобрегат патĕнчи (Барçелонă çывăхĕнче) хапрăк рабочийĕсем хăйсем пухнă 600 пин пезет укçана вăрçă расхучĕсем валли правительствăна йарса панă.

Йулашки хыпарсем

Çурçĕр полюсне çĕнсе илекенсем Украинăра

Çурçĕр полюсне çĕнсе илнĕ геройсем апрелĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа Харьковри ĕççыннисем патĕнче хăнара. Апрелĕн 9-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕсем И. Д. Папанин, Е.Т. Кренкел, Й.К. Федăрăв йулташсем Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактăр саватĕнче, „Серп и Молот“ саватра, Сталин йачĕпе тăракан саватра, Дзержински йачĕпе тăракан çар училишчинче, Испанирен килнĕ ачасем пурăнакан çуртра пулнă. Хаклă хăнасене пур çĕрте те пит савăнăçлăн кĕтсе илнĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ П. П. Ширшов йулташ Днепропетровскра Петровски йачĕпе тăракан металлурги саватĕнче пулнă. Рабочисемпе служăшчисем П. П. Ширшов йулташа калама çук савăнăçлăн кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĚ

ПАРТИН ЙЕРТСЕ ПЫРАКАН ОРГĂНĚСЕНЕ СУЙЛАМА ХАТĚРЛЕНЕÇÇĚ

Йěпреç районě

Апрелěн 8-мěшěнче парти райкомě парторгсен канашлупе ирттерчě. Канашлура ПСК(б)П Тěп Комитечě партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине тата суйлавсене ирттермелли плана сÿтсе-йавнă.

Партин пуçламěш организацисен тата кандидатсен группясен отчотпа суйлав пухăвěсем апрелěн 14-мěшěнчен пуçласа 25-мěшне çитиччен пымала. Райком отчотсене те çак вăхăтрах ирттерме палăртнă.

Районри парторганизацисенче парти Тěпкомě партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йавас ěç çителěксěр пырать. Районра парторганизацисем 12 шутланаççě. Апрелěн 8-мěш тěлне 3 парторганизацире çеç парти Тěпкомěн постановленине сÿтсе-йавнă.

(„Чăваш Коммунě" корр.).

Улатăр районě

ПСК(б)П Тěп Комитечě партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине апрелěн 7-мěшěнче, парторгсен канашлăвěнче сÿтсе-йавнă. Халě партин пуçламěш организацисенче партин йертсе пыракан оргăнěсене суйламалли инструкцине сÿтсе-йаваççě.

Апрелěн 9-мěшěнче парти шкулěсемпе кружоксенче партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен парти Тěпкомě йышăннă постановленине вěренчě. („Чăваш Коммунě" корр.).

Йетěрне районě

Партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен парти Тěпкомě йышăннă постановленине партин 17 пуçламěш организацисенче сÿтсе-йавнă. Пухура тухса калакан коммунистсем парторганизацисен çитменлěхěсене палăртаççě. Вăл çитменлěхсене пěтерме тěрлěрен сěнÿсем параççě.

Хатěрлев комитечě çумěнчи коммунистсем пухура партилě-политикăлă ěçе хусалăх ěçěсемпе çыхăнтарса пырас ыйтăва çирěп лартнă. Йетěрне районě государствăна сěт-çу тăратас плана 18 процент çеç тултарнă. Коммунистсен пухăвě государствăна сěт-çу тăратас плана апрелěн 10-мěш тěлне 50 процента çитерме йышăннă. Ку ěçе пурнăçлама пěтěм коммунистсене йавăçтарнă.

Йетěрне райкомě апрелěн 8-мěшěнче парти активěн пухăвне ирттерчě. Пухура парти Тěпкомě партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине тата отчотпа суйлав пухăвěсене ирттермелли плана сÿтсе-йавнă.

Парторганизацисенчи отчотпа суйлав пухăвěсем апрелěн 24-мěшěнчен пымала. Парти райкомě кашни пуçламěш парторганизацинче хăйěн ěçěсем çинчен отчот туса парать. („Чăваш Коммунě" корр.).

Шăхасан районě

Партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттересси çинчен парти Тěпкомě йышăннă постановленине пур парторганизацисенче те сÿтсе-йавнă.

Апрелěн 3-мěшěнче парторгсен канашлуне туса ирттернě. Канашлура партин йертсе пыракан оргăнěсен суйлавěсене ирттермелли плана сÿтсе-йавнă. Пуçламěш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвěсене апрелěн 25-мěшěччен ирттерме пăхнă.

Райком инструктăрěсем парторгсене отчотсем çырма пулăшаççě. Кунсăр пуçне тата парторгсене суйлава хатěрленме пулăшма райком членěсем апрелěн 13-мěшěнче партин пуçламěш организацисене, кандидатсен группясене тухса кайаççě.

Парти райкомě хăйěн ěçěсем çинчен пур организацисенче те отчотсем туса парать.

Майăн 20-мěшěнче районри коммунистсен пухăвě пулать. Ку пухура райком отчочě пулать тата райком пленумěн членěсене суйламала.

(„Чăваш Коммунě" корр.).

Декабрěн 12-мěшě йачěпе тăракан колхозри выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçěн пуçлăхне, паллă свинаркăна (Вологдă облăçě, Прищекспинский район), Матрена Гаврилăвна Комаровăна пумайăх пулмаст ПСК(б)П членне илнě.

Ÿкерчěк çинче: Комаровă йулташ вěренет.

Г. Иефимовский фото-ÿкерчěкěнчен (Союзфото).

Комсомол активěн районри пухăвě

ЙЕТĚРНЕ. Çак кунсенче районри комсомол активěн пухăвě пулса иртрě. Пуху ПСÇЛКС Тěпкомěн пленумěн решенийěсем мěнле пурнăçланса пыни çинчен уйрăм Комсомол комитечěсен тата пуçламěш организаци секретарěсен доклачěсене итлерě.

Комсомол активěн пухăвě хăшпěр пуçламěш организацисенче (райěçтăвком, Пушкăр, Иванкăрă, Мăн-Шемер организацисем) ПСÇЛКС Тěпкомěн V-мěш пленум решенийěсене сÿтсе-йавса, ěçе кěртме ку таранччен те кирлě пек тытăнманнине палăртрě. Ку тěлěшпе комсомол райкомě те çителěксěр ěçлет. Райком çумěнчи пуçламěш организаци пайан кун та пленум решенийěсене сÿтсе-йавман. Çавăн пекех актив чылай комсомол организацисем комсомолта тăман çамрăксем хушшинче йапăх ěçленине палăртрě. Хăшпěр колхозсенче ку таранччен те комсомол организацийěсем организациленмен.

ПСÇЛКС Тěпкомěн V-мěш пленум решенийěсем комсомол ěçне лайăхлатас тата комсомол йышне ÿстерес ěçре калама сук пысăк вырăн йышăнса тăраççě. Пуху, пленум решенийě кăтартнисене большевикла пурнăçласа пырса комсомол ретěнчен тăшмансене кăкласа ывăтма, карьериссемпе перестраховщиксене тăрăшыв çине кăларса, комсомола илессипе тимлěн ěçлесе пыма решени йышăнса хăварчě.

Ник. Цветков.

ОТВЕТЛĂ ĚÇСЕНЧЕ

ЙЕТĚРНЕ. Пушнарти Мичурин йачěпе тăракан колхоз çумěнчи комсомол пуçламěш организацийě пур ěçре те лайăх ěçлесе пырать. Комсомолěцсенчен колхозри ответлă ěçсенче ěçлекенсен шучě те хутшăнса пырать. Пайанхи куна колхозра икě комсомолěц бригадирта, пилěк комсомолěц кладовщикра, счетоводра, арман заведуйушчинче, клуб заведуйушчинче т. ыт. çěрте ěçлеççě. Вěсем пурте колхозра аван ěçлесе, ыттисене пример кăтартаççě.

Кăçал комсомол организацийě йалти çамрăксенчен драмкружок организацилерě. Драмкружока комсомолěц С. Токарěв йертсе пырать. Вăл лайăх ěçленипе драмкружок Кăлканăн „Аписсă" пйесине 12 йалта, Осипăвăн „Кушар" пйесине 3 йалта лартса панă.

Хальхи вăхăтра колхозри кашни бригадăрах комсомолěцсем агитатăр пулса ěçлеççě. Вěсем бригадăсенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечěсене суйламалли Положенисене вěрентеççě. Çавăнпа пěрлех çуракине хатěрленессипе те тимлěн ěçлеççě, агрокружоксене вěренме çÿреççě.

Н. Романăв.

52 АГИТАТĂР

СЕНТЕРВАРРИ. Парти райкомě РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечěсене суйламалли Положенисене вěрентес тěлěшпе икě хутчен агитатăрсен вуншар кунлăх курсне туса ирттерчě. Вăл курссенчен пěтěмпе 52 çын вěренсе тухнă. Вěсенчен чылайěшě комсомолěцсем—вулав çурт пуçлăхěсем. Çак агитатăрсем хальхи вăхăтра пурте РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечěсене суйламалли Положенисене ěççыннисене ăнлантарса парассипе ěçлеççě.

Гр. Çмирнов.

Комсомола кěреççě

ВĂРНАР. ПСÇЛКС Тěпкомěн V-мěш пленум решенисене сÿтсе-йавнă май колхоз çамрăкěсем комсомола кěреççě.

Зооветтехникум çумěнчи комсомол организацийě çěнěрен 30 çамрăка комсомола илнě. Ку шутран 6-шě хěрачасем.

Çавăн пекех Вăрманкасри „Самолет" колхоз çумěнчи пуçламěш организацинче 11 çамрăк, Булатăвăри Ворошилăв йачěпе тăракан колхозри комсомол организацинче 8 çамрăк комсомола кěнě.

Ст. Улангай.

Хисеплě агитатăрсем

ВĂРНАР. Районра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечěсене суйлама хатěрленес ěç сарăлсах пырать. Пěтěм ěççыннисем суйлав Положенисене чěререн йуратса вěренеççě. Акă, Упнерти „Апнер" колхозра суйлав положенисене вěренес тěлěшпе кашни бригадăрах (колхозра пěтěмпе 6 бригада) кружоксем организациленě. Кружоксем пайанхи куна çитсе икшер заньяти туса ирттернě. Суйлав Положенисене колхозниксене теплěн вěрентес ěçре Çмирнов Петр агитатăра палăртмала. Çмирнов суйлав Положенисене вěрентес тěлěшпе ырми-канми ěçлет. Вăл ССР Союзěн Верховнăй Советне суйлана кампани вăхăтěнче участкăри суйлав комиççи председателěн заместителě пулса ěçленě.

Çмирнов йулташ вулав çурчěн ěçне лайăхлатассипе те тăрăшса ěçлет. Вăл вулав çурт пуçлăхě пулса ěçлеме пуçланăранпа унăн вулав çурчě районра лайăх ěçлекенсемпе танлашрě.

Н. Т. Козлов.

Йăнăшсене хăвăртрах тÿрлетмеле

КÿКЕÇ. Нумайăх та пулмасть районри комсомол активěн пухăвě пулса иртрě. Пуху ПСÇЛКС Тěпкомěн V-мěш пленумěн решенийěсем çинчен сÿтсе-йаврě. Доклад тăрăх прениере 15 çын тухса калаçрěç. Вěсем пурте вырăнти пуçламěш организацисемпе комсомол райкомěн йăнăшěсене кăтартса пачěç.

Акă, райěçтăвкомра ěçлекен Мурзайěв комсомолěца парти историне вěренмелли кружок заньятинче асăрхамасăр пěр сăмах каласа йанăшăн тата ыйту çине çийěнчех ответ парайманшăн пропагандисран тата комитет членěнчен кăларса хыта йатланă, тăшман теме хăтланнă. Вăрманкасри ССРС Верховнăй Советне суйлас тěлěшпе ěçленě участкăри суйлав комиççи членě пулнă Йерлаковă комсомолка çинчен райкома „Йерлаковă суйлав вартăнлăхне пасна" тесе еклě жалăба панă хыççăн, тěрěслемесěрех ăна комсомолтан кăларнă. Çавăн пекех Мăнпÿкассинчи Сталин йачěпе тăракан колхозри бригадира—Григорйěв комсомолěца та еклě жалăбасем тăрăх ěçе тěрěслемесěр тата хăйне комсомолěцсен пухуне чěнмесěрех ПСÇЛКС ретěнчен кăларса пăрахнă. Тěрěсленě хыççăн Григорйěв нимěнле айăплă ěç туни те курăнман.

Тата пассивлă тесе комсомол ретěнчен кăларнă тěслěхсем те сахал мар. 1937-мěшпе 1938-мěш çулсенче пуçламěш организацисем 64 çынна комсомолтан кăларнă пулнă. Вăл шутран райкомол 35 ěç пăхса тухса, 23-шне тěрěс кăларнă, тесе çирěплетнě. Акă, вăрманпромхоз организацинче пěр пухурах „пассивлă" тесе темиçе комсомолěца хăйсене пухăва чěнмесěрех кăларса пăрахнă. Тавăшкассинчи Кудряшов çулахи вăхăтра, кěтÿ пăхнă чухне член укçине тÿлесе пыайман, çавăншăн ăна комсомолтан кăларнă.

Й. Васильěв.

Чăвашвăрманпромсойуз ěçне йусамала

Ěççыннисен пурнăçě лайăхланса, чечекленсе пыни,—промысла кооперацийěн умне татах та çирěпрех, ответлăрах задачăсем кăларса тăратать.

Ěççыннине вальли паха та лайăх таварсем туса кăларасси—промысла ертелсен чи ответлă ěçě пулса тăмала.

Ку тěлěшпе ěçсем пирěн республикăра мěнле тăраççě-ха? Çакна каламала, йулашки çулсенче пирěн промысла ертелсемпе мастерскойсем чылай пысăк ěçсем турěç. 1932 çулта Чăвашвăрманпромсойуз çисçтемине кěрекен ертелсемпе мастерскойсем тата пěчěк савăтсем 11 мěлйун тенкěлěх продукци туса кăларнă. 1937 çулта 17,6 мěлйун тенкěлěх продукци тусе кăларчěç. Ěç тухăçлăхě 13,2 процент, рабочисен ěçукçийě 8,7 процент ÿсрě. Кунсăр пуçне тата 1937 çулта çěнě производствăсем ěçлеме пуçланă (музыкă инструменчěсем, сăрланă стружкăсем тăвасси) т. ыт. те.

Ěçе тěрěс организациленипе, техникăна хăвăрттăн алла илнě май, чылай ертелсем планран ытлашши продукци туса кăларса, пысăк тупăш илеççě. Акă сăмахран, Çěмěрлери „Труженик" ертел (директăрě Хохлов йулташ) çак йулашки икě çул хушшинче продукци туса кăларассине икě хут ÿстерчě. Иртнě çулта ертел 880 пин тенкě тупăш илчě. Халě унта çěмçе пукансем, дивансем тата паркет производствисем уçнă. Кусем те ěнтě ертеле пысăк тупăш пама пултараççě. Ертел лайăх ěçленě май рабочисен пурнăçěпе йăла условийěсем те лайăхланса пыраççě. Рабочисен хăйсен клуб, ача йасли пур.

1937 çулта Тăрмăшри, Çур-Майдари, Вăрнарти тата Йěпреçри промысла ертелěсем те паха тěслěхсем кăтартса ěçлерěç. Уйрăм стахановěцсем ěçре большевикла хастарлăхпа ěçлесе пысăк çěнтерÿсем турěç. Вăрнарти „Труд" ертелти пичке тăвакан М. Морйагин йулташ нормăна йаланах 200 процент таран тултарса ěçленě. Çавăн пекех Çур-Майдан ертелěнчи рамщик В. Козлов 180 процент, станочница Ф. Васильěвă 208 процент, (Йěпреçри „Кооплеспром" ертелě) тултарса пынă т. ыт. те. Вăл йулташсем ěç техникине алла çавăрса илнě, стахановла меслетпе ěçлесе пыраççě. Вěсен пурнăçěнче малтанхи çулсемпе танлаштарсан ытах та пысăк улшăнусем пулнă. Ф. Васильěвă йулташах илер. Вăл ертелте 1933 çултанпа ěçлет. Ěçе кěнě чух унăн нимěнле професси те пулман. Кайарахпа ăна станочнике куçарнă. Техминимум кружокěнчен вěренсе тухнă хыççăн, кашни куллен 388 килограм турпас саваласа кăларас вырăнне, 806 килограм кăларма пуçланă. Çитěнÿсем пěтěмпех унăн ěç вырăнне тěрěс организациленěрен, ěçхатěрěсене, станока лайăх тытнăран тата ěçлемелли вăхăтпа пěтěмпех усă курнăран пулнă.

Анчах çапах та Чăвашвăрманпромсойуз пěтěмěшпе илсен йапăх ěçлет. Çитменлěхсенчен уйрăмăнах туса кăларакан тавар пахалăхě çителěксěр пулнине, чылай ертелсем хăйсене панă плана тултарса ěçлейменнине палăртмала. Иртнě çулта 29 ертелтен плана тултарнисем пěтěмпе те 13 ертел çеç пулчěç. Уйрăмăнах Улатăр, Вырăс-Чукальск, Упакасси, Пысăк Шахчура ертелěсем йапăх ěçлеççě.

Çакă ěнтě вăл ертелсенче стахановла йухăм йапăх сарăлса пынине уççăнах кăтартса парать. Социализмла ăмăрту ěçне кирлě пек туса пымаççě. Мордва республикипе ăмăртăва тухса çырнă догăвăра çулталăк хушшинче пěрре те тěрěслесе тухман, ертелсем те хăйсем хушшинчи догăвăрсене тěрěслемеççě.

Вăрманпромсойуз йенěпе ěçлекен ертелсем 1938 çулхи пěррěмěш квартăл планне икě уйăх хушшинче 76 процент тултарнă. Анчах çапах та кăна çителěклě теме çук. Вăрманпромсойуз руководителěсем пěргте хăйсене тивěçлě пек ěçлемеççě, ертелсене çирěп кăтартусем парса йертсе пырассине час-часах çырусем урлă туса пыраççě.

Вăрманпромсойуз правлени председателě Купцов йулташ 4 уйăх хушшинче пěр ертелте те пулман, çавăнпа вăл вырăнсенче ěçсем мěнле пынине лайăх пěлмест.

Халăх тăшманěсемпе вěсене хÿтěлекенсем вăрманпромсойуз çисçтеминче те пулнă. Пастернак Новински ертелте сушилкă тутарман пирки ертел йаланах йурăхсăр таварсем туса кăларнă, пысăк сийенсем пулса пынă. Çавăн пекех Липăвкари ертел председателě Асанăвпа Максимăв бухгалтěр ертеле çаратса пурăннă. Йулашки икě çул хушшинче вěсем 68 пин тенкě çаратнă.

Халě ěнтě вěсене çапса аркатнă. Малашне пирěн большевикла сисěмлěхе татах та вăйлатмала, икěпитлě çынсене, халăх тăшманěсене вăхăтра палласа илме вěренмеле.

Чăвашвăрманпромсойузěн ертелсене куллен-кун пулăшса, кăтартусем парса пырасси—тěп задачă пулса тăмала. Анчах пайан вăл курăнмасть-ха.

П. Кондратйěв.

Лотерей билечěсене илеççě

●● Елěк районěнчи ěççыннисем Осоавиахимăн 12-мěш лотерей билечěсене пысăк хаваслăхпа илеççě.

Елекри вăтам шкулта вěренекенсемпе вěрентекенсем 540 тенкěлěх, пуштăра ěçлекенсем 260 тенкěлěх, райěçтăвкомра ěçлекенсем 875 тенкěлěх, Чапайěв йачěпе тăракан колхоз членěсем 146 тенкěлěх, Тавăтри „Сталинит" колхоз членěсем 150 тенкěлěх, Мăнпакăшри „Хěрлě партизан" колхоз членěсем 150 тенкěлěх илчěç.

Ф. Филиппăв.

●● Сěнтěрвăрринчи вăрманěç техникумěнче вěренекенсемпе вěрентекенсем лотерей билетне 2010 тенкěлěх илчěç.

Г. Çмирнов.

●● Канашри педучилищăра вěренекенсемпе преподавателěсем лотерей билетне 1500 тенкěлěх илчěç.

И. Давыдăв.

М. Дăчилăв Чалдун

Чумаков бригади

(Калав)

Çуркунне çитрě. Хěвел ăшшăн пăхать. Вăл хăйěн ăшшипе сывлăша, çěр питне ăшăтать. Çутçанталăкăн чи илемлě вăхăчě пуçланать.

Кěмěл пек тăрă шăнкăртатса йухса выртакан çăл кусěнчен инçе мар, тăррине хăмапа витнě хырă пÿрт тăçтан курăнса ларать. Унпа йунашар лаша вити. Çав станра ěнтě Чумаков бригадирăн бригади вырнаçнă.

„Май" колхоз бригадирěн Чумаковăн йачě пирěншěн тахçанах паллă. Ун çинчен хаçат-журналсем çинче пěрре çеç мар çырнă. Вăл пилěк çул хушши бригадир пулса ěçлет. Лайăх ěçленěшěн вунă хут премии илнě. Кунсăр пуçне тата ăна райěçтăвком хисеплě грамăтă панă.

Чумаков хăйěн бригади сурхи акана хатěрри çинчен пăхса çавăрнать. Чи малтан вăл уйа тухса, тин йур айěнчен тухнă нÿрě çěре аллипе тытса хыпаласа пăхать. Хура тăпра пÿрнисен хушшинчен шăпăртатса тăкăнать.

—Çěр типсе çитнě. Тепěр икě кунтан акана тухма йурать,—тесе хăй тěллěн калаçать. Уйран таврăннă май вăл тÿрех витене кěрет, лашасене пăхса çÿрет. Лашасен ěнсисене, айак пěрчисене хыпаласа пăхать. Çурăмěсенчен аллипе шăлкаласа ачашлать. Выльăх та ачашланине пěлет. Лашасем ун çине ăшă куçěсемпе пăхаççě.

— Ну, мěнле, йулташсем, лашасем сурхи акана вăхăтра пěтерме тÿсěç-и?— тесе ыйтать Чумаков коньухсенчен.

— Ху куçупа куратăн, аллусемпе хыпаласа пăхатăн. Ку лашасем те тÿсмесěн, тата мěнле лашасем тÿсěç! — тесе ответлеççě коньухсем.

— Епě те тÿсěç тесе шутлатăп. Висě ерне хушши вěт вěсем утăпа сěлě çинче тăнă,—тесе савăнăçлăн кулать Чумаков. Унтан вăл тимěрçě лаççи патне пырса, йусанă плугсене, сÿресене, çейăлкăсене пăхать. Пурте хатěр. Лаша вити хыçěнче икě кěлет. Унта туллийěх вăрлăхсем. Вěсене тахçанах суртласа-тасатса хунă.

Çапла Чумаков пěтěм бригадăн хуçалăхне пăхса çавăрăнчě. Унтан хěрлě кěтесе кěчě. Унта культурник сурхи акана тухас умěн стена хаçачě кăларма хатěрленет.

— Чумаков йулташ, сурхи ака пуçланнă йачěпе тухакан хаçат вальли, вăхăтăр пулсан, пěр статйа çырса параймăр-ши?—ыйтать культурник.

— Çырса парас,—сěтел хушшине ларса статйа çырма пуçлать бригадир. Вăл çырса пěтерне тěле бригадă вальли апатсимěç пěçерсе хатěрлекен хěр пырса кěрет. Унăн куçěсем кăвак, çÿçě кăлкан-сарă, питçăмартисем пиççе çитнě панулми пек илемлě, пěвě хăмăш пек йаштака. Мěн ěçлеме пултармě çак хěр! Кам йуратмě ăна!

— Аван-и, Чумаков йулташ? Пайан епěр сирěкпе курнăçман.

— Пит аван, Пăлаки. Чăн-и çав, есě качча кайма пуçтарăнать, теççě? —ыйтрě Чумаков.

— Чăн пулмасан калаçмěччěç,—терě Пăлаки кулса.

— Есě качча тухсан, кам бригадă вальли апат хатěрлě-ха?

— Кам хатěрлетěр. Хамах хатěрлеп. Есě вара, епě качча кайăп та, ěçлеме пăрахăп, тесе шутлатăн-и мěн? Ан хăра, Чумаков йулташ. Ху та вěт çамрăк мар, авланса курнă,—тесе ěнентерет Пăлаки.

Пăлаки çирěм çулхи хěр пулсан та, шÿт тума çав тери йуратать. Вăл пěр пěччен пěтěм бригадăна савăнтарать. Йурлама тăрсан, сасси шăпчăкăнни пек йанăрать. Ташлас йенчен илсен, ăна çитекен никам та çук.

—Каччу кам пулать вара? Хамăр колхозран-и, йе йутран? пěлмěпи пулса ыйтать Чумаков.

— Хаљ каламастăп. Ак, сурхи ака пěтерсен, туй тунă чухне хăварах пěлěр кам иккенне,—ответлет Пăлаки.

— Апла есě ака пěтмесěр качча тухмастăн-ха?

— А есě мěнле шухăшланăччě: ака вăхăтěнчех тухě тесе-и?—кулкаласа илет Пăлаки.

Пăлакипе пěрле Чумаковпа культурник те савăнăçлăн кулаççě.

Çапла Чумаков бригадинчи колхозниксем пушă вăхăтра шÿт тума, кулма, ташлама йуратаççě. Пěр ěçлеме тытăнсан вара, вěсен аллисенчен тимěрçě лаççинчи пек хěлхем сирпěнет. Вěсем ěçлеме пултараймастпăр, тесе йăнăшса тăмаççě. Мěн ěç тытнă, çавна вăхăтра туса пыраççě.

Ак сурхи акана тухас вăхăт çитрě. Бригадăра ěçлекен арçынсем, хěрарăмсем пурте пěрле пуçтарăннă. Бригадир Чумаков сăмах калать:

— Йулташсем, пирěн бригадă иртнě сурхи ака вăхăтěнче те кайа тăрса йулман. Кăçал та йулма тивěçлě мар. Кайа тăрса йулас мар, малта пырас тесен мěн кирлě? Ун çинчен Сталин йулташ çапла каланă: „Колхозниксене пуйан та культурлă пурнăçлă тăвас тесен, мěн кирлě? Вăхăтлă, тăрăшса тата шанчăклă ěçлес пулать. Вара мěн ěмěтленни çитет" тенě. Епěр те, Сталин йулташ вěрентнě пек тěплěн ěçлер. Сурхи акана вăхăтлă пěтерер. Пирěн çине ытти колхозсем çеç мар, йединоличниксем те шанчăклăн пăхчăр. Епěр тěплěн ěçленине кура колхоза кěччěр.

— Тěрěс калать Чумаков йулташ, тěрěс,—темиçе саслă харăс кăшкăрчěç.

Ěç пуçланчě: хăшěсем витерен лашасем çавăтса тухаççě, хăшěсем плугсене, çейăлкăсене хатěрлеççě. Ěç вěрет.

Çирěм минут хушшинче бригадă пěтěмпе хатěрленсе çитсе, сурхи ака пуçларě.

— Ав, колхозниксем сурхи ака пуçларěç. Епěр хăçан? Лаша начар. Вăрлăх та çителěксěр. Плуга та йусаттараймарăм. Сан пирки çак кунчен çапла тарăхса пурăнатпăр. Колхоз пуçлансанах кěнě пулсан, халиччен тăраниччен çăкăр çиме çеç мар, ěнелě те пулăттăмăр,—пěтěм чунěнчен тарăхса каларě Пăликар.

Арăмě Пăликара хирěç чěнмест. Упăшкипе вунă çул пурăнса икě ача çуратнă пулсан та, вăтанчě пулас. Пуçне чикрě, пит çăмартийěсем хěрелсе кайрěç. Çапах та хытă чěрелě. Колхозниксем пуйан та культурăлă пурăннине курса тăрах: „Ата, кěрер еппин" тесе каламарě.

Пирвайхи çул шкулта вěренекен сакăр çулхи хěрача:

— Анне, çынсем пурте колхозра. Есě мěншěн аттене кěме чарса тăратăн?— терě амăшěн куçěнчен тинкерсе пăхса.

—Лěпěртетсе ан тăр. Асу хăраххи. Пыр шкулна. Кайа йулăн тата. Сан ěç çук,—ачине вăрçса тăкрě амăшě.

— Çиллÿне ниçта хураймасăр, ачана ан вăрç,—ăнлантарчě Пăликар арăмне. Леш каллех упăшкине хирěç ыра та усал та чěнмерě.

Çапла Пăликарпа арăмě саккăрăмěш çул ěнтě турткаланса тăраççě. Пăликар хăй тахçанах колхоза кěресшěн, арăмě нимпе те майа килмест.

Малтанхи йарана Чумаков хăй çуртарса тухрě:

— Ак çапла тарăннăш сухала. Асту шăйрăк ан хăвар. Шăйрăк хăварнине курсан авланнă чух туйпа пымăпăр,— терě Чумаков шÿт туса.

— Туйра бригадир пулмасан, мěн илем?— калаçăва хушăнчě комсомолěц Çтапан. Унтан çирěп аллисемпе плуга çавăрса тытрě те, акана пуçларě.

Ултă кун хушши ěçлерě Чумаков бригади. 205 гектар çěре сухаласа, сÿресе акрě. Ултă кун хушши çěр айěн-çийěн çавăрăнчě. Анчах Пăликарăн çурпилěк ани шурă саплăк пек тăрса йулчě.

Пуринчен малтан хăйěн нормине комсомолěц Çтапан пěтерчě:

— Епě пěтертěм,—тесе кăшкăрчě ана вěçне тухсан Çтапан.

— Суйатăн. Пěтермен,—утса пычě ун патне Пăлаки.

—Мěнле пěтермен? Хамăн плана çěр çирěм пилěк процент тултартăм,—терě Çтапан тěлěнсе.

— Ав, куратăн-и, пирěн пусу вěçěнче çурпилěк çěр йулнă? Вăл та вěт сан пасму,—терě Пăлаки Пăликарăн акаламан ани çине пÿрнипе чăсса кăтартса.

— Чăнах та, епěр вěт хамăрăнне акса пěтерсен, Пăликар пиччене акаласа пама сăмах панăччě. Мансах кайнă,—терě Çтапан та.

— Есě ывăнтăн пуль. Кăшт кан. Пар хама, лашусене. Кайса акалам,—терě Пăлаки Çтапан аллинчен тилхепине илсе.

— А, есě акалама кайсан, кăçхи апат кам пěçерě?

— Епě унта пěçерсе хатěрленě. Есě вăнчěç кайса антарса çи,—терě Пăлаки йăл кулса.

Пăлакипе Çтапан çапла калаçса тăнă çěре Чумаков утса пычě:

— Ну, Çтапан, Пăлаки, сурхи акана вăхăтра пěтертěмěр. Халě ěнтě туйа хатěрленěпěр,—терě вăл хěрпе каччăн сурăмěсенчен супăрласа.

—Туйа хатěрленме ěлкерěпěр. Анчах... Ав унта пěр саплăк йулнă—пуçне тайса кăтартрě Пăлаки.

—Пулăшас пулать, пулăшас,—терě Чумаков та.

Тăвата плуг çур сехет хушшинче Пăликарăн çурпилěкне хуратса та хучěç.

—Сурхи ака пěтрě тесе шутлатăп. Халě, Çтапанпа Пăлаки туйне хатěрленěпěр,—терě Чумаков йулашки йарана йăвалантарса тухсан.

Шăп çав вăхăтра Пăликар та ани патне пырса çитрě. Пăхать: çурпилěкне акаласа пăрахнă:

— Ара, Чумаков йулташ, есě мěншěн ман çурпилěке акаларăн?—хăраса ÿкрě Пăликар.

— Ан хăра, Пăликар пичче. Епěр ăна хамăра мар, сана пулăшса акаласа патăмăр. Ак, кама тавту. Çак астутарчě,— терě Чумаков Пăлаки çине кăтартса.

— Тавтапуç сире йулташсем,—терě Пăликар.

Киле таврăнсан, Пăликар арăмне колхозниксем пулăшни çинчен каласа пачě. Арăмě упăшкин сăмахне итлерě, Пăликар йăлăнса каланине туйса илчě.

— Пыр еппин, колхоза кěме зайавлени леççе пар. Илеççě-ши вара?—терě хулен.

— Илмесěр, илеççě!—терě Пăликар савăнăçлăн.

Тепěр ернерен Пăлакипе Çтапанăн туйě пулчě. Çав туйра колхозник Пăликарпа унăн арăмě те йурласа, ташласа

Кăнтăр йенчи районсем çуракине тытăнчĕç

Клевĕр акаççĕ

ЙĔЛЧĔК. Апрелĕн 10-мĕш (телефон тăрăх хамăр корр.). Пайан Ленин йачĕпе тăракан колхоз, „Осоавиахим" тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсем клевĕр акма тухрĕç. Сталин йачĕпе тăракан колхозра 10 гектар акнă.

МТСтанцийĕ пур трактăрсене те вырăна çитерсе лартнă. Орденоносĕц Павлăв бригади çуракине тухма хатĕр. Çĕр сухалама йурăхлă пулассине кашни кунах сăнаса тăраççĕ. Павлăв бригадинчи трактăриссем Карамаликăвпа Васильĕв йулташсем иртнĕ çулта 1200-шер гектар сухаланă, кăçал вĕсем 1800 шер гектар сухалама пулса ăмăртăва тухрĕç.

Ф. Майков.

ЙЕТĔРНЕ, апрелĕн 10-мĕшĕ (телеграф тăрăх). Çĕнĕ Тинкешри Макçим Горький йачĕпе тăракан колхоз пайан уйа тухса кĕрхи тырă калчисем çине пурĕ 15 гектар клевĕр акса хăварчĕ.

Ник. Цветков.

Тихăнăв комсомолĕц йертсе пыракан колхозра

ШĂХАСАН. Уйкăс Кипекри Тельмăн йачĕпе тăракан колхоз районта малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Колхоз организаципе хуçалăх йенчен тĕреклĕ. Иртнĕ çулсенче колхоз чаплă клуб туса лартрĕ. Уйтах колхоз канцелярийĕ, библиотекă, парикмахĕрски уçнă. Кăçал кунта колхоз çамрăкĕсем виçĕ хутчен спектакль, çич-сакăр хутчен вечĕрсем туса ирттернĕ. Колхоз çамрăкĕсем тĕрлĕрен ташăсем, вăйăсем вĕренеççĕ. Ваттисем те клуба çÿреççĕ, вĕсем билиардла, шашкăла, шахмăтла выляççĕ. Çапла иртереççĕ пушă вăхăта колхозниксем.

Колхозăн таварлă сурăх фермиччĕ иртнĕ çулта 290 сурăх пулнă. Çавăнтан 40 сурăхне колхозниксене сутнă. Фермă иртнĕ çулта 10.800 тенкĕ тупăш панă. Фермă пуçлăхĕ пулса чи чаплă маçтăр, Павлăв Анани, 4 çул хушши пĕр улшăнмасăр ĕçлет. Кăçал вăл республикăри йалхуçалăхĕнче малта пыракан стахановĕцсемпе ударниксен слетĕнче пулчĕ. Слетран таврăнсан татах та хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕ. Фермă йенĕпе 20 пин тенкĕрен кайа мар тупăш пама пулчĕ вăл.

Иртнĕ çул ку колхоз районта вăйлă тырпул туса илекенсенчен пĕри пулчĕ. Г. Константинăв бригади вăтамран гектар пуçне 20-шер центнĕр, 12 гектар çинче 31-шер центнĕр сĕлĕ туса илнĕ. Кăçал унăн бригади кашни гектар çинче 150 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме обйазательствă илчĕ. Бригадă обйазательствăна пурнăçлама агротехникăла ĕçсене пурне те тунă. Кăçал ку бригадă 48 гектар çине йаровизацилесе, 10 гектар çине бионтизацилесе акать, кунсăр пуçне 10 гектар çинче мулчировани тăваççĕ. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе вăл 6-мĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет. Ку бригадăсем кăçал стахановла ĕçлекен бригадăсем пулма обйазательствăсем илнĕ.

Колхоз кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме кĕркуннех тытăннă. Йамацри „Ударник" тата Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозсемпе ăмăртăва тухнă. Тельмăн йачĕпе тăракан колхозăн 1-мĕш бригади 5-мĕш бригадăпа, 2-мĕш—4-мĕшпе, 3-мĕш 6-мĕшпе ăмăртаççĕ. Çавна май кашни колхозник ăмăртăва хутшăнса хăй çине татăклă обйазательствăсем илнĕ. Кунта кашни колхознике уйрăм ĕç çумне çирĕплетнĕ. Кăçал ака вăхăтĕнче 24 колхозник суха тăвас ĕçре, 12 колхозник сÿрелес ĕçре ĕçлемеле. Клевĕр акма Тимофейĕв колхозникпа Ижелейĕва Дарийа колхозницăна уйăрнă.

Ака вăхăтĕнче кашни бригадăрах пĕрле апатланмалли столовăй пулать. Халĕ апат-çимĕçсене кирлĕ таранах хатĕрленĕ. Апат пĕçерекенсене те уйăрнă. Колхоз вăрлăхсене акма кирлĕ таранах уйăрса суртласа хунă. Çĕре çемçетмелли ытлашшипех пухса хатĕрленĕ.

Йалхуçалăх машинисене тахçанах йусаса çу сĕрсе, тасатса лартнă. Колхозăн 70 лаша. Вĕсем пурте вăтам ÿтлĕ. Халĕ ĕç лашисене канма тăратнă. Коньухсем лашасене çуракине самăр кăларассишĕн тăрăшаççĕ.

Ку колхоза Тихăнăв Федăр комсомолĕц—колхоз председателĕ йертсе пырать. Комсомолĕцсем тăрăшнипе колхоз çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ.

Халĕ колхозра РСФСР Верховнăй Советне суйламалли Положени çинчен колхозниксене тĕплĕн вĕрентеççĕ.

Ваç. Чернов.

Апашри „Урожай" колхозра

Апашри „Урожай" колхоз (Шупашкар р.) кăçал кашни гектартан 120 пăт тĕштырă туса илес тĕлĕшпе Чăрăшкассинчи „Крахмал" колхозпа социалисăмла ăмăрту договăрĕ туса çирĕплетнĕ хыççăн бригадăпа бригадă, звенопа звено ăмăртăва хутшăннă.

Вĕсем чи малтанах агроплан тунă. Агроплан тăрăх 344 центнĕр акмалли вăрлăха трийĕр витĕр кăлармала, 62 центнĕр пĕрчĕлĕ тырăсене алăпа суртламала пулнă пулсан, ăна пĕтĕмпех туса çитернĕ.

Акнă тырпул тикĕс шăтса тухтăр тесе 344 центнĕр вăрлăха йаровизацилесе акма палăртнă. Кунсăр пуçне бионтизаци туса 16 гектар, нитрогинизаци туса 24 гектар, азотогенизаци туса 10 гектар çине акма пăхнă. Колхозăн 252 центнĕр суртлă вăрлăх улăштармала пулнă пулсан, ăна ытлашшипех улăштарса хатĕрленĕ.

Вăрлăхсем аван шăтаççĕ: урпа 97 процент, „Капитал" пăрçа 99 процент, ытти культурăсенчен те 96 процентран кайа шăтаканни пĕр вăрлăх та çук.

Колхозăн çуракинче 223,45 гектар пĕрчĕлĕ тырăсем акса хăвармала, 18 гектар çине çĕрулми лартмала. Çуракинче ĕçлеме колхозниксене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетсе тухнă. Колхозра пурĕ 88 арçын, 153 хĕрарăм ĕçлейе пултараканнисем, вĕсем пурте çураки вăхăтĕнче мĕнле ĕçре ĕçлемелине лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Кунта йалхуçалăх машинисене пĕтĕмпех йусаса хатĕрлесе лартнă. Лашасем пурте тенĕ пекех вăтам ÿтлĕ.

Халĕ колхозниксем çуракинче кирлĕ пек туса çитермен хатĕрсене туса çитерессишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем кăçалхи çуракине кĕске срукра пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. Михейĕв.

Лашасене лайăх пăхаççĕ

„Çавалстрой" колхозри (Çĕрпÿ р.) комсомолĕц С. Фомин çичĕ çул хушши аслă коньухра ĕçлет. Вăл лашасене пăхассине пысăк та ответлă ĕç вырăнне шутлать, хăйĕн ĕçне йаланах йĕркелĕ туса пырать. Çавăнпа ĕнтĕ вăл пăхакан лашасем уйрăмах мăнтăр.

— Епĕ коньухра йуратса ĕçлетĕп, манăн лашасене йаланах мăнтăр, таса усрас килет,—тет вăл.

Çуракине ирттернĕ çĕрте туртăм вăйĕ пысăк вырăнта тăрать. Çавна шута илсе, С. Фомин начартарах лашасене вăйлă апат çине тăратнă, пĕтĕ кĕсресене йăвăр ĕçрен хăтарнă.

Коньухсем çуракине пур лашасене те мăнтăр та таса кăларассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

С. Чернов.

Пĕтĕ кĕсресене пăхмаççĕ

Ентимĕркассинчи „Комбайн" колхозра (Ишлей р.) пĕтĕ кĕсресене йăвăр ĕçрен хăтарман. „Булан" йатлă пĕтĕ кĕсрене пур ĕçе те кÿлсе çÿренĕ. Вăрăм çула кÿлсе çÿренĕ кĕсре мăнтăр, тĕреклĕ тыха тăвайман. Çавăнпа та хăмласан 5—6 кунтанах тыхийĕ вилнĕ. Çитменнине кунта пĕтĕ кĕсресене уйрăмăн пăхмаççĕ, ытти лашасемпе пĕрлех шăварма кăлараççĕ.

Çавăн пекех Йамайкасси йалсоветне кĕрекен Çеçмер колхозĕнче те пĕтĕ кĕсресене кÿлсе çÿреççĕ. „Машкă" йатлă пĕтĕ кĕсрене çула кÿлсе кайнă хыççăн шыв ĕçтерсе хăм пăрахтарнă. Çеçмер колхозĕнче хăм пăрахнă кĕсресем татах та пур.

Кĕсресем хăм пăрахнă тĕслĕхсене татах та тупма пулать. Кусем пурте пĕтĕ кĕсресене ĕçрен хăтарманнинчен, лайăх пăхса усраманнинчен килеççĕ. Анчах та районра çак çитменлĕхе пĕтерме тытăнман.

Гер. Шчербаков.

Йулса пыракан колхозсене вăхăтра пулăшмала

ТĂВАЙ. Иртнĕ çулта районри чылай колхозсем, вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма права илчĕç. Çак çитĕнÿсем колхозниксем тăрăшса ĕçленипе, социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йанипе çеç пулма пултарнă. Иртнĕ çулхи çитĕнÿсем колхозниксене кăçал тата лайăхрах ĕçлеме, социалисăмла ăмăртăва татах анлăн сарса йарса пихăçан пулман вăйлă тырпул туса илме хавхалантараççĕ.

Тăвай районĕ Вăрмар районĕпе ăмăртса ĕçлет. Тăвайсем ăмăртура мала тухассишĕн хытă тăрăшаççĕ. Колхозсенче халь ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслеме пуçларĕç.

Акă, Çĕнĕ Шипуçĕнчи Чапайĕв йачĕпе тăракан, Чутейри „Хурçă" колхозсем пĕр-пĕрин ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслÿре Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитни курăнчĕ. Колхоз вăрлăхсене 100 процентпех суртласа хунă.

Ку колхозра И. Т. Никитин председатель пулса йертсе пырать. Вăл лайăх ĕçленипе йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри слетĕнче пулма тивĕçлĕ пулнă. Ăна будильник тата 200 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Никитин слетран таврăнсан колхозниксен пухăвĕнче слет ĕçĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Колхозниксем „Хурçă" колхоза социалисăмла ăмăртăва чĕнсе, 23 центнĕртан кайа мар тĕштырă туса илме пулнипе пурнăçлама сăмах пачĕç.

Çав вăхăтрах Чутейри „Хурçă" колхозра çуракине хатĕрлесе ĕç пачах урăхла пырать. Вăрлăха пайанхи кунта та тасатса çитермен. Вăрлăх участкисем çине акма вăрлăхсене алăпа суйламалла пулнă, анчах пĕр килограм та суйламан. Йалхуçалăх машинисене те йусаса пĕтермен.

Кунта кадрсем хатĕрлес ĕç те начар пырать. Йаровизатăрсем, вăрлăха тĕрлĕрен емелсемпе чÿхекенсем кирлĕ, анчах пĕр çынна та вĕрентмен. Колхозра ĕç дисциплини те начар. Çак çулте кăтартнă çитменлĕхсем пурте колхоз правленийĕ начар ĕçлесе пынинчен килеççĕ. Колхоз председателĕ Е. А. Козлов йаланах ĕçсе çÿрет, ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пымасть. Социалисăмла ăмăрту çинчен асăнакан та çук. Бригадăсем сăмахпа ăмăртаççĕ, ĕçре нимĕн те çук, ăмăрту договăрĕсене пайанхи кунччен те туса çирĕплетмен.

Çавнашкалах Ураскассинчи „Ĕçлĕх çулĕ" колхозпа Çĕнĕ Сырмари Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз хăйсен ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслÿре „Ĕçлĕх çулĕ" колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе аван ĕçлесе пыни курăнчĕ. Ку колхозра вăрлăхсене суртласа хунă. Йалхуçалăх машинисене, лаша таврашĕсене йусанă.

Çав хушăрах Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пит йапăх ĕçлесе пырать. Вăрлăхсене сĕлĕпе тулăна кăна суртланă, ытти культурăсене пĕр пĕрчĕ те суртламан.

Йăнтăрчри „Сулăм" колхозпа Тепе йалĕнчи „Çĕнĕ çул" колхозсем те ăмăрту договăрне тĕрĕслерĕç. „Çĕнĕ çул" колхоз çуракине пур йенчен те лайăх хатĕрленсе пырать. „Сулăм" колхоз хатĕрленсе çитмен. Тулă, урпа тата виккă вăрлăхĕсем акма йурăхлă мар. Акма йурăхлă текеннисене те çийелтен кăна суртланă. Ăна халь тепĕр хут суртламала. Вăрлăх участкисем çине акма вăрлăхсене тасатса çитермен. Вырăнти удобренисем хатĕрлесси те çителĕксĕр. Йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтермен.

Колхозсем тĕрĕслÿре пулнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме палăртса хăварчĕç.

Ал. Пикишкин.

ДЖАМБУЛ

ЛЕНИНПА СТАЛИН

Джамбул вăл кăна манас çук виличчен,—
Курса еп çÿрерĕм кăмăл тулличчен,
Курса еп çÿрерĕм çĕршывăм тавра
Хăватлă та вутлă маттур утпала.
Вĕççе, шуса иртрĕç тем тĕрлĕ çĕрсем,
Вĕлт-вĕлт туса йулчĕç сатсем, уй-хирсем.
Шăваççĕ хавас пĕлĕтсем çилпеле
Алтай йеннеле те Çĕпĕр çинеле.
Васкавлă Арысăн сар хумĕ çинче
Хăравçăн та шиклĕн текерлĕк вĕçет.
Риспа хĕвĕнен вĕç-хĕррисĕр хире
Хĕртет сар хĕвелĕ—кăварпа пĕрех.
Кĕрлет, хумханать ак чарусăр Арал,
Çапать сырана вăл вал хыççăн вал.
Ак пирĕн хирсенĕн пики Актÿбе,
Тем чухлĕ тырпул ун, выляхĕ кĕтÿпех.
Унтан еп çĕклерĕм хавас кăмăла:
Пуçламĕш хут куртăм çап-çут Атăла.
Таçтах ыткăнать вăл хăватлăн йухса,
Хум çийĕн шур чайкă вĕçет йарăнса.
Телейлĕ çĕршывăм, мĕн чухлĕ илем!
Йепле йуррăма еп ăна пехиллем?
Сисетĕп, туйатăп, — ăшра ман хускав, —
Çут ĕмĕтĕм сывăх — столицă Мускав.
Ак тухрĕ вăл тăчĕ телей хумĕ пек
Илемле çап-çутă катмар тумĕпе.
Илтетĕп: — шăвлаççĕ йем-йешĕл сатсем,
Курап: йăлкăшаççĕ çап-çут кÿлĕсем,
Кермен пек илемле те чаплă суртсем,
Çĕр айĕн чупаççĕ метро-вакунсем...
Кунта ак çÿренĕ Ленин атте,
Етемшĕн çекленĕ пурнăç хăватне...
Çеçен хирсенчи казахсен йачĕпе
Еп пытăм мухтавлă хĕрлĕ плошчĕде.
Мăнаçлăн лараççĕ Кремĕл хÿмисем,
Çап-çут йăлкăшаççĕ ылттăн çăлтăрсем.
Çĕр чăмăр чĕрийĕ — гранит-мавзолей.
Пур халăх килеççĕ йухса вăл теле.
Килеççĕ: казаке, ойрочĕ, таджик,
Таса йуратулă чĕрийĕ кашнин.
Килеççĕ; афганĕце, персĕ, араб,
Пуриншĕн те—Ленин хурçă карап.
Еп хам та кĕретĕп вĕсемпе пĕрлех,
Салхулăн пăхатăп çулпуçĕ çине.
Куратăп: выртать вăл нихçан та вилми
Тăван та аслă çулпуçĕ Илйич.
Савса пуç тайаççĕ ăна йалавсем,
Савса пуç тайаççĕ ăна халăхсем.
Анчах та илтмест вăл, выртать шăпăртах,
Чĕрийĕ тапмасть ун текех кăкăрта.
Илтмест вăл, йепле еп казах чĕлхипе
Ăшшăн саламлатăп тăван ывăл пек.
Тупа еп тăватăп—ленинĕц пулма,
Ленин пек хĕрÿлĕн кĕрешме, пурăнма.
Пĕлтерĕп еп хамăн сăвă-йурăмпа,
Ачам-пăчама та йăха, арăва,
Етемлĕх хĕвелĕ — Ленин çинчен,
Ленин пек генилĕ Сталин çинчен.
Сикет ман чи-пысăк телейлĕ чĕрем, —
Еп Сталина куртăм тăван Кремĕлре.
Мĕн пур халăхсен çулпуçне йунашар
Тăрса еп каласрăм хавас та хастар.
Ун çирĕп маттур аллине тăванла
Тытса чăмăртарăм таса кăмăлпа.
Çав алăпа Сталин аттемĕр пире
Кăтартрĕ мăн çул — хĕвеллĕ ире.
Йертсе вăл пыратĕ ăста алăпа
Çĕр çитмĕл те пиллĕк мĕлйун халăха.
Ун асĕ Памир тăвĕнчен те çÿлте,
Ун кăмăлĕ кашни етем чĕринче.
Арал шывĕнчен те хăватлăрах вăл,
Мĕн пур ĕççынин тăван ашшĕ вăл.
Хĕвел пек хĕрÿ те вĕри кăмăлпа
Хĕртсе ăшăтать вăл кашни халăха.
Мĕн пек ÿкĕтлетĕп еп акă хама:
Сăмах çитеймест ман ăна мухтама.
Çеçен хирсене таврăнсан Мускавран
Пур халăха пухăп еп тăван колхозран.
Пĕр харăс йанратăпăр епĕр вара
Сăртсем хушшинчи йухăм-шыв пек йурра.
Вара çĕршывăмăр тăрăх инçе, пит инçе
Йанранĕ вăл йурă Аслă Сталин çинчен.

И. Тукташ куçарнă.

Мускав—Атăл каналĕн Хлебникăвăри пăрахутсем йусакан мастерскойĕн стахановĕцĕсем. Сулахайран сылтăмала: „Каманин" теплоходăн механикĕ И. Лифанăв, механически цехăн слесăрĕ Ф. Гостĕв, „Каманин" теплоход механикĕн помошникĕ Н. Шадьа, електросварщик С. Каравайĕв, „Иосиф Сталин" теплоход механикĕн помошникĕ А. Бурметйĕв.

А. Иоселевич фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Майăн 1-мĕшне хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Парти райкомĕпе райĕçтăвком кăçалхи майăн 1-мĕш уйавне ирттерме комиççи организацилерĕç. Комиççи уйав ирттермелли плана çирĕплетсе, ăна вырăнсене салатрĕ.

План тăрăх, районри организацисемпе колхозсем, йалсоветсем, çак кунсенчех хăйсен уйав комиççийĕсене, хатĕрленÿ плăнĕсене тумала. Апрелĕн 8-мĕшĕнче профсойуз организацисен пухăвĕсенче уйава хатĕрленес ыйтусене сÿтсе йавмала. Апрелĕн 12-мĕшĕнче 4 подрайонти йалсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулать. Апрелĕн 18-мĕшĕнчен демонстрацине хатĕрленес ĕçе тытăнмала.

Апрелĕн 20-мĕшĕнчен вара район центрĕне йала культурлатас, илемлетес, йăвăçсем лартас ĕç пуçланать. Апрелĕн 22-мĕшĕнче май уйавне ирттерес ыйтусемпе комсомол райкомĕ комсоргсен канашлуне ирттерет. Çав вăхăтсенчех уйав кунĕсенче тата çуракинче сугу-илÿ ĕçĕсене организацилес ыйтусемпе йалпо председателĕсен канашлуне ирттереççĕ.

Май уйавĕ умĕн райком агитатăрсемпе тата йала кайакан йулташсемпе инструктивлă пуху туса ирттерет. Апрелĕн 30-мĕшĕнче пур çĕрте те чаплă ларусем, вечĕрсем пулса иртеççĕ.

Шăхасан ĕçхалăхĕ майăн 1-мĕшĕнчи уйава 6 колоннăпа тухать. Митингсем хыççăн демонстраци, вăйăсем пулса иртеççĕ.

Учреждениссенче, профсойуз организацисенче, йалсоветсемпе колхозсенче, бригадăсенче май уйавĕ йачĕпе социалисăмлă ăмăрту вăйланса пырать. Малта пыракан Кирав, Куйбышĕв, Тельмăн, Калинин йачĕпе тăракан тата „Пионер" колхозсем çак ăмăртăва хутшăнчĕç.

В. Чернов.

Вĕренÿре аван ĕлкĕрсе пычĕç

ШĂХАСАН. Анат Сурăмри çарĕç вĕренÿ пунктинче 1917—1918 çулта çуралнă допризывниксем 120 сехетлĕ вĕренÿ программине апрелĕн 3-мĕшĕнче вĕренсе пĕтерчĕç.

Вĕренÿре уйрăмăнах Карташов, Михайлăв, Петров, Гордейĕв йулташсем аван ĕлкĕрсе пычĕç. Вĕренÿ хушăра Ворошилăв пек тĕл переке сен значокĕн нормине 17 ача, ПВХО 47 ача, ГСО значокĕн нормине 44 ача пачĕç. Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне допризывниксем 188 тенкĕлĕх илчĕç.

Допризывниксем йалсене салансан колхозсенчи Осоавиахимăн пуçламĕш организацисенчи ĕçĕсене аванлатассипе вирлĕн ĕçлеме пулчĕç.

Допризывник Н. Михайлăв.

Вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн

Йетĕрнери педучилищă кăçалхи вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн тăрăшать. Ку тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ: вĕренÿре йулса пыракансемпе консультацисем туса ирттернĕ, ултă кунта пĕрре уроксем хыççăн вырăс чĕлхипе диктантсем туса пынă. Каçсеренех географи, физика, литературă кабинечĕсем ĕçленĕ. Ăмăрту договăрĕсене кашни уйăхрах тĕрĕсленĕ, вĕренÿри çитменлĕхсене кăтартса парса, вăхăтра тÿрлетнĕ.

Виççĕмĕш чĕрекре вĕренÿри отличниксен шучĕ, пĕрремĕш чĕрекпе танлаштарсан, икĕ хут ÿснĕ. Вĕренекенсенчен нумайĕше начар паллăсене пĕтерсе отличнă вĕренме пуçларĕç. Акă сăмахран, 1 „В" класра вĕренекен А. Васильĕв пĕрремĕш çурçуллăхра 3 начар паллăпа вĕренне пулсан, виççĕмĕш чĕрекре начар паллăсене пĕтĕмпех пĕтерчĕ, 3 предметпа отличнă вĕренет.

Виççĕмĕш чĕрекре начар паллăсен шучĕ 2 хут чакрĕ.

В. Свешникăв.

Трахомран тасалаççĕ

1935 çулта диспансеризаци тунă чухне Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуç йалсоветне кĕрекен йалсенче трахомлисем 300 çын палăрнă. Трахомлисен шучĕ пысăккине шута илсе, районри сывлăх пайĕ, 1936 çулта Шĕнерпуç йалсоветне ĕçлеме М. Игнатйĕвă трахсестрана йачĕ. Вăл трахомлă çынсене емеллессишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Трахом чирĕн сийенĕ çинчен калаçусем пулнă хыççăн, трахомлисем куçĕсене емеллеме трахпункта йĕркелĕ çÿреме тытăннă. Трахпункта çÿреме пултарайманнисем патне Игнатйĕвă йулташ килĕсене çÿресе емеллерĕ.

Çавăн пек ĕçлесе ик çул хушшинче 254 çынна трахомран сыватнă. Вăл хăй ĕçлекен йалсоветĕнчи трахомлисене пурне те сыватса çитерессишĕн тăрăшать.

И. Васильйĕв.

Агротехникăлă консультаци

МАХОРКĂ КАЛЧИНЕ ÿСТЕРЕССИ

Махоркă калчине виçĕ майпа—парниксенче, çурмала ăшă тата сивĕ йăрансем çинче ÿстерме пулать. Епĕ хиличчен анлăн усă курнă йĕрке çинчен, Чăваш республикĕн условийĕнче, уйрăмăнах Вăрнар районĕнче махоркă калчисене сивĕ йăрансем çинче ÿстермелли йĕркесем çинчен каласа парасшăн. Калчасене ÿстермелли вырăна пĕлсе суйласа илни пысăк вырăн йышăнать. Калчасене ÿстермелли вырăн тÿрем йе хĕвеланăçĕпе кăнтăр йенеле кăштах тайăлмăлă, сивĕ çилсем тивмеле мар, çумкурăксемсĕр, лайăх çемĕçтернĕ тата шывсем сывăхнерех пулмала. Кăçалхи условире калчасем ÿстерме палăртнă вырăнсенче йур ытларах выртма пултарать. Çавăнпа та çак вырăнти йура хăрăм йе кĕл сапса тухса часрах ирĕлтермеле. Çĕр участки çине кĕркунне удобрени хывса хăварман пулсан, çителĕклĕ таран çĕрнĕ тислĕк тăкмала. Ун хыççăн сухалама, 2—3 хут сÿрелеме кирлĕ. Хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăç йеннеле окучникпе 40—50 сантиметр, сарлакăшĕ йăрансем чавмала. Йăрансен çÿлĕшĕ 7—8 сантиметр, нÿрĕ вырăнта çÿлĕрех пулмала. Стенисем йăтăнса анасрăн йăрансем тавра горбыль хămасем хурса тухмала. Йăрансене калча тумалли вăрлăха акас умĕн çеç хатĕрлеме йурать. Калча тумалли вырăна вăрлăха виçĕ срукра акаççĕ. Пĕрремĕшĕнче—апрелĕн 22-мĕшĕ тĕлнеле, çуракине тухнă хыççăн, пĕтĕм акмалли вăрлăх шутĕнчен 50—60 процент, иккĕмĕшĕнче—30 процент тата виççĕмĕшĕнче—20 процент. Çав акмалли сруксен хушши 3—4 кун пулмала.

Вăрлăха акиччен малтан ăна лапис ирĕлчĕкĕ ăшĕнче чÿкемеле. Ăна пĕр литр шыв çине пĕр грамм хутăштарса, тăмран йе йăвăçран тунă савăт ăшĕнче хатĕрлемеле. Çав ирĕлтерсе хатĕрленĕ шыв çинче хутаçа чикнĕ вăрлăха 10—15 минут хушши тытса, кĕленче-патакпа чÿхесе тăмала. Пирĕн колхозсенче лапис вырăнне ирĕлтернĕ формалинпа усă курма пулать. Пĕр пай формалин çине 50 пай таса шыв йарса хутăштараççĕ. Ирĕлтернĕ формалин çинче вăрлăха 10 минут хушши тытса тăмала. Вăрлăха çав майсемпе чÿхенĕ хыççăн 10—15 минут хушши, кашни 2—3 минутра пĕрре улăштарса пырса, йухакан шыв çинче чÿхемеле.

Калча тума шăтса сăмсаланнă вăрлăхсене суйласа илмеле. Хăш срукра мĕн чухлĕ акмалине шута илсе вăрлăхсене шăтармала, ытти вăрлăхсене çил çинче типĕтмеле, акма тытăниччен унта тытса тăмала. Вăрлăхсене акма тухиччен 5—6 кун малтан çеç шăтарса хатĕрлеме йурать.

Шăтармалли йĕрке çакăн пек: вăрлăх тултарнă хутаçа, пÿлĕмри температурăра, 10—12 сехетлĕхе шыва чиксе хумала, ун хыççăн вăрлăха шывран кăлараççĕ, йĕпетнĕ чăлтăрка пир çине йе кĕççепе чĕркесе хураççĕ те 20—28 градуслă ăшă вырăнта тытса тăраççĕ. Хутаççене кашни кунах силлеççĕ, йĕпетсе тăраççĕ. Пур вырăнта та пĕр пек шăттăр тесен, вăрлăха хутаçран кăларса 3—4 сантиметр хулăмĕш сарса тухмала, вăхăтран вăхăта пăтратса тăмала. Вăрлăха çийĕнчен мĕнпе те пулин витмеле.

4-мĕш йе 5-мĕш кунĕсенче вăрлăх сăмсаланма пуçлать. Вăрлăха унăн шурă вĕçĕ курăниччен анчах шăтарма йурать. Пĕтĕм вăрлăхран 30—40 процент çавăн пек шăтсан, вăрлăха çил çинче кăштах типĕтмеле, кайран пĕр пай вăрлăхпа 20—30 пай таса хăйăра хутăштарнă хыççăн алăпа акмала. Пĕр тăваткăл метр çине 2—3 грамм вăрлăх кирлĕ, ăна пĕр пек тикĕс акса тухмала. Акнă вăрлăх çине 3 пай çĕрсе çитнĕ тислĕк, 2 пай тăпра тата пĕр пай хăйăр хутăштарса ала витĕр кăларса сарса тухмала. Çакăн пек тăпрана йăран çине 0,5—1 сантиметр хулăмĕш сарма йурать. Çавна сарса тухнă хыççăн, çийелтен кĕреçепе тикĕслесе тухмала. Тăпра типсе кайсан шăвармала. Калчасем шăтса тухиччен çийелтен маттăсемпе витсе усрамала. Калчасем шăтса тухиччен типĕ çиллĕ çанталăксенче çеç шăварма йурать.

Калчасем шăтса тухма пуçласан витнĕ маттăсене малтан 2—3 сехет хушши, кайран ытларах уçса тăратмала, кайран витсе усрама пăрахмала. Калчасене шăварса, çумкурăкĕсенчен тасатса тата сайралатса тăмала. Ăшă çанталăкра каçхине, сивĕ çанталăкра ирпе шăварма кирлĕ. Çанталăк сивĕтесси палăрсан каçхине шăварма йурамасть. Шăварнă хыççăн каçхине сивĕтсе йанă пулсан, ирпе ирех çăл шывĕпе маттăсем витĕр шăвармала, сывлăм типнĕ хыççăн маттăсене асăрхарах илсе хумала.

Калчасем ăнăçлах ÿсмеççĕ пулсан, пĕр витре шыв çине 10—15 грамм аммиаклă селитра, 12 грамм суперфосфат тата 10 грамм кали тăварĕ хутăштарса шăвармала. Кун хыççăнах таса шыв сапса тухмала. Хутăштарнă имçамлă шывсемпе куçарса лартиччен 10 кун маларах шăварма йурать.

20 тваткăл сантиметр çине 4—5 калча хăвармала. Куçарса лартиччен виçĕ кун анчах йулсан шăварма чарăнмала. 35—42 кун хушшинче 2—3 сантиметр çÿлĕш ÿсекен, 5—6 çÿлçăлă калчасем—лайăх калчасем пулаççĕ. 1937 çулта çуркунне сивĕрех пулчĕ, çакна пула калчасем 60 кун таран ÿсрĕç. Çавах та патвар пулаймарĕç, çакна пула чылай колхозсенче ытла нумай вăхăт хушши ÿснĕ калчасене куçарса лартрĕç.

Тислĕкпе лайăх çемçетнĕ çĕр çинче ăшă ытларах тăрать. Çак вырăнта калча хăйне кирлĕ çимĕçе ытларах илсе ăнăçлăрах ÿсет, ăна тĕрлĕ чирсем тата хурткăпшанкăсем те сийен тăваймаççĕ.

Пирĕн махоркă лартса тăвакан колхозсенче вăрăм ÿссе кайнă калчасене куçарса лартма пикенеççĕ. Кун пек калчасене лартма йурамасть, мĕншĕн тесен вĕсем икĕ ернерен чечек кăларма тытăнаççĕ тата ырхан пулса йулаççĕ. Лайăх ÿсекен калчасене суйласа илсе куçарса лартмала. Çĕрĕк тымарлă, чирлĕ калчасене куçарса лартмала мар. Таса, çирĕп ÿсекен калчасене кĕске срукра, 7—8 кун хушшинче куçарса лартни, махоркăна агрономи вĕрентнĕ тăрăх пăхса ÿстерни çак çулта тухăçлă махоркă туса илме май парĕ.

Агроном—Ильюкинă

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕ пысăк ăнăçлăхпа иртет

„Аршин мал алан" çпектакльте И. В. СТАЛИН, В. М. МОЛАТАВ, К. Й. ВОРОШИЛАВ, М. Д. БАГИРАВ йулташсем пулнă.

Азербайджансен М. Ф. Ахундав йачĕпе тăракан оперăпа балет театрĕ апрелĕн 9-мĕшĕнче каçхине „Аршин мал алан" йатлă хаваслă та вичкĕн çпектакль кăтартнă, çпектакльне аслă режиççор, Азербайджан ССРеспубликĕн тава тивĕçлĕ артисĕ Исмаил Идайат-заде йертсе пынипе лартнă. Çак паллă музыкăлă комеди,—ăна композитăр Узеир Гаджибекав 1914 çултах çырнă,—Мускав çыннисене унăн творчĕствин малтанхи тапхăрĕпе паллаштарат. Куракансене çпектакль çав тери кăмăла кайнă.

Азербайджан ССРеспубликĕн тава тивĕçлĕ артисĕсем Бӳль-Бӳль тата Г. А. Гаджибабабекав, артисткăсем—Сона Мустафайевă, Аль Терегулавă, Марйам Бабайевă, Агигат Рзайевă, артиссем—Алекпер Гусейн-заде тата Ахмед Анатолльы çпектакльте лайăх выльанă, унта вичкĕн сценăсем нумай пулнă. Комединчи интригăн каçăхтарса йаракан самантсенче залра ларакансем хаваслански кулнă тата ырласа ала çупнă.

Халăх инструменчĕсен оркестрĕ паха выльанă, оркестра Сеид Рустамав йертсе пынă. Мелодилĕ, чăн-чăн халăх музыкĕ сценă çинчи ĕçсемпе вырнаçулăн çыхăнса пынă, çпектаклĕн нацилĕ тĕсне паллă туса тăнă. Адхем Султанав художник тунă витĕмлĕ декорацисем çпектакльне татах та вăйлатнă.

Çпектакльте И. В. Сталин, В. М. Молатав, К. Й. Ворошилав, М. Д. Багирав йулташсем пулнă.

Çпектакль пĕтнĕ хыççăн, куракансем пурте выльакансене хĕрӳлĕ оваци туса саламланă

(ТАСС).

Колхозниксен пуйан пурнăçĕ ӳссех пырат

Дагестан АССР-чи Кизльар районĕнче „15 лет Октября" йатлă колхоз-миллионер пур. Вăл колхоз халь питĕ пысăк строителства ĕçĕсене тăват. Електростанци туса лартнă. Колхозниксен килĕсене Илйич лампăчки çутатат. Ача çуратмали çурт, столовăй, кинотеатр, радиоузел, магазин тата пурăнмали пилĕк пысăк çурт тăваççĕ.

Колхозниксем колхозра ĕçлесе пысăк тупăш илнĕ. Вĕсем хăйсем те нумайĕшĕ пысăк строителства тăваççĕ. Бурлуцки колхозникĕн çемйи ĕçкунĕсем çине, çимĕççемсĕр пуçне, укçан 8.478 тенкĕ илнĕ. Бурлуцки йулташ çĕнĕ çурт лартат, çурчĕ виçĕ пӳлĕмлĕ пулат тата вăл киле вальли сĕтел-пукан, шкап, крават тавраш ĕсем çĕнĕрен туйанат.

(ТАСС).

7.664,4 пин гектар çуртри акнă

Апрелĕн 5-мĕш тĕлне Совет Сойузĕнче 7.664,4 пин гектар çуртри акнă. Çураки планне 9 процент тултарнă. Иртнĕ çулта çак числа тĕлне 9923 пин гектар акса плана 11 процент тултарнă пулнă.

Колхозсем 6.932,4 пин гектар тата мĕн пур çиçтемăсенчи совхозсем 732 пин гектар акнă.

ССРС Совхозсен Халăх Комиссариачĕн тата ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем начар акаççĕ. ССРС Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем иртнĕ çулхи хăвăртлăхпа ĕçлесе пыраççĕ.

Сталинград, Саратав, Воронĕж, Харькав, Курск тата Томбов облаçĕсенче ака-суха ĕçĕ тӳсме çук йерипен пулса пырат.

Çĕрĕç органĕсем тата вырăнсенчи советпа партин йертсе пыракан органĕсем йулса пынине сирсе йама мобилизациленмен. Çанталăк лайăхланчĕ пулсан та, нумайĕш колхозсемпе совхозсенче ака-суха ĕçне пуçлама тăхтаса тăраççĕ. Механисăмсен вăйĕпе туллин усă курмаççĕ.

Совет Сойузĕ тăрăх

●● ССРС Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариатне пăхăнса тăракан промышлĕннăç пĕрремĕш квартăл планне иртерсе тултарнă. Пĕтĕм виçĕ мĕлйард та 85.220.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, плана 106 процент тултарнă. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш кварталпа танлаштарсан, продукци 17,5 процент ӳснĕ.

●● Бльавинскри (Оренбург облаçĕ) пăхăр-кӳкĕрт ĕçлесе кăларакан комбинатăн опытлă савăчĕ малтанхи продукци панă. Çак комбината туса пĕтереççĕ ĕнтĕ, вăл пирĕн тĕслĕ (цветной) металлургинчи пысăк предприйатийĕсенчен пĕри пулат.

●● Мечетинскайа станцăри (Ростов облаçĕ) библиотекăран йалан кĕнеке илсе вулакансем 1.495 çын, вĕсенчен нумайĕшĕ колхозниксем. Библиотекăра 15 пин том кĕнеке. Ăна вальли йатарласа чулçурт тунă.

●● Апрел уйăхĕнчи малтанхи 8 кун хушшинче Мускавра Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çар училищисене вĕренме илме ыйтса 1.300 зайавлени панă. Зайавлени панисенчен çурри комсомолецсем, 20 проценчĕ вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă.

(ТАСС).

Суту-илӳ ĕçĕнчи активĕн канашлăвĕ

Апрелĕн 7-8-мĕшĕсенче, Шупашкарта, суту-илӳ ĕçĕнчи активăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 1938 çулти таварçавăрнăш планĕ тата суту-илӳ ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен ЧАССР суту-илӳ халăх комиссарĕ Вастрӳк йулташ доклад турĕ.

Актив канашлăвĕ Суту-илӳ Халăх Комиссариатне, Чăвашторга, Чăвашпотребсойуза йертсе пыракан йулташсене суту-илӳ ĕçне йертсе пырассине урăхлатса çĕнетме хушса хăварчĕ. Канашлу ĕçне парти обкомĕн çекретарĕ Павлав йулташ, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Спасав йулташ хутшăнса ĕçлерĕç. Пайан епĕр канашлу чĕнсе каланине пичетлесе кăларатпăр.

Чукунçул строителстви

62 километр лини хывнă

Хальхи вăхăтра лини хывакан бригадăсем 39-мĕш километрта ĕçлеççĕ. Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 62 километр тăршшĕ лини хывнă. Шупашкара çитиччен 39 километр йулнă. Тата 4 километр хушшинче лини хывса 35-мĕш километртă çырма урлă каççан, Шупашкара çитиччĕнех лини хывассине тытса тăракан кĕперсемпе трубасем пачах та пулмаççĕ.

Станцăсем тата ытти служба çурчĕсене тăвасси питех те вăраххăн пырат. Ку йенĕпе строителства планне 21 процент çеç тултарнă.

Предприйатисенче

УЛАТĂР. Предприйатисемпе учреждениссенче ĕçлекенсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене массăлăн илеççĕ. Хуткупăс хапрăкĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсем 1000 тенкĕлĕх, чукунçул çинче ĕçлекенсем 500 тенкĕлĕх илчĕç.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Алтай крайĕнчи Барнаул хулинчи метеорологи станци пуçлăхĕ П. Д. ПЕРЕПЕЛЬУК çил ăçтала та та мĕнле хăвăртлăхпа вĕрнине паллă тăвакан хатĕре тĕрĕслет. С. Чирешкин фото-ӳкерчĕкĕнчен (Сойузфото)

Парти органĕсен суйлавĕсем

Апрелĕн 8-мĕшĕнче Мускаври, Харькăври, Минскри, Краснодарти, Свердловскри савăтсемпе хапрăксенчи пуçламĕш парти организацисенче партин йертсе пыракан органĕсен отчочĕсемпе суйлав пухăвĕсем пуçланнă.

Мускавра парти организацисенче пухусем пысăк организациллĕхпе иртеççĕ. Нумайĕш парторганизацисенче пухусене коммунистсем çĕр процентпех пынă. Каганович йачĕпе тăракан тормăс савăтĕнче 228 парти членĕсемпе кандидачĕсенчен икĕ çын çеç, чирлĕ пирки, пухăва пыман.

Пухусем пысăк активлăхпа иртеççĕ. Кирав йачĕпе тăракан „Динамо" савăтра партком отчочĕ тăрăх пренире тухса каласма 52 çын çырăнnă пулсан, 36 çын тухса каласнă.

Коммунистсем хăйсен организацин партилĕ ĕçри çитменлĕхĕсене çивĕччĕн критиклеççĕ. Тухса калакансем большевикла сыхăлăха татах та вăйлатасси çинчен кăтартса параççĕ, халăх тăшманĕсен—троцкисла-бухаринла шпионсемпе тăван çĕршыва сутакансен ирсĕр сăтăрлă ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах тата хастаррах пĕтерме чĕнеççĕ.

Пренире тухса калакансем партилĕ-массăлă тата идейăлă-политикăлă ĕçе малала та лайăхлатассине уйăрăмăнах палăртаççĕ.

(ТАСС).

Çĕршывăн предприйатийĕсенчи производствăлă çĕкленӳ

Донбасри шахтăсемпе савăтсенче майăн 1-мĕшне çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илессишĕн социалисăмлă ăмăртӳ сарăлсах пырат. „Артемуголь" трестăн Калинин йачĕпе тăракан шахтинче майăн 1-мĕш йачĕпе пыракан ăмăртăва 1.100 горньак хутшăннă. Шахтă плана кашни кунах иртерсе тултарат. Апрелĕн 6-мĕшĕнче шахтă кăçалхи çул чи нумай—1.966 тонна кăмрăк кăларнă,—талăкри заданийе 12,3 процент иртерсе тултарнă. Макейевкăри Кирав йачĕпе тăракан савăт апрелĕн 6-мĕшĕнче плана пĕтĕм металлурги циклипе тултарнă. Вăл кун 4-мĕш прокат цехĕн коллективĕ 1060 тоннă прокат парса, плана 125 процент тултарнă.

Тулăри пăравус деповĕн коллективĕ,—ăна Верховнăй Совет депутачĕ Огнĕв йулташ йертсе пырат,—майан 1-мĕшне хатĕрленсе, социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанă. Ремонт бригадисем апрел уйăхĕнче план тăрăх 14 пăравус йусаса кăларма обйазателства илнĕ. Вăл обйазателствă пит лайăх пурнăça кĕрет—пĕрремĕш пилĕккунлăхра 4 пăравус йусанă.

(ТАСС).

Шупашкар хули совечĕн пленумĕ

Апрелĕн 8-мĕшпе 9-мĕш кунĕсенче Шупашкар хули совечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра хулари парти активĕ тата совет активĕ те пулчĕ.

Пленум икĕ ыйту пăхса тухса решенисем йышăнчĕ: 1) Хулан халăх хуçалăхĕпе культурă строителствин 1938 çулти планĕ çинчен тата 2) Хула совечĕн 1937 çулти бӳджетне пурнăçа кĕртнипе 1938 çулхи бӳджет çинчен.

Пĕрремĕш ыйтупа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. Спасав йулташ доклад турĕ. Унăн докладĕнчен умма калама çук пысăк картинă тухса тăчĕ. Кăçалхи çултан Шупашкарта промышлĕннăçлă пысăк узел тăвасси пуçланат. Кăçал пысăк савăтсем лартаççĕ, авто-ремонт савăчĕ, пысăк кирпĕч савăчĕ, теплоелектроцентраль лартма хатĕрленес ĕçсене тумала. Çав вăхăтрах тата кивĕ предприйатисене—елекростанцине, тирсăран савăтне тата ерех савăтне йусаса çĕнетме пысăк укçа-тенкĕ хываççĕ. Шупашкартах кăçал вальцевăй арман тума тытăнаççĕ. Çак ĕçсене тунă май хулан сăн-сăпачĕ пĕтĕмпех улшăнса çĕнелет, хулара рабочисен йышĕ те нумайланат, Шупашкар политикăлă, административлă центр пулнипе пĕрлех, промышлĕннăçлă центр пулса тăрат.

Хулари тирпей-йусавлăх ĕçĕ вальли, халăха çутта кăларас ĕç вальли, сывлăха сыхлас ĕç вальли те пысăк укçа-тенкĕ уйăрнă. Кăçал Карл Маркс тата Роза Льуксембург урамĕсене асфальтпа витеççĕ, чылай урамсенче чул, йывăç торцовкă сараççĕ. Кăçал 880 вырăнлă çĕнĕ шкул, 100 вырăнлă ача йаçли тата ытти çуртсене те чылай туса лартмала. Пурăнмали çурт-йĕрсем, анатланмали вырăнсем тăвас йенпе пысăк ĕçсем пулаççĕ. Кăçал хулан транспăртне тăвас ĕç те пуçланат: хулана вальли икĕ автобус тата тăватă такси туйанаççĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа пленум хула совечĕн фининс пай пуçлăхĕн Золотников йулташăн докладне итлерĕ. Кăçалхи çул хула совечĕн бӳджечĕ, иртнĕ çултине танлаштарсан, 48 процент ӳсет (1937 çулта 4.393.000 тенкĕ пулнă, 1938 çулта 6.183.000 тенкĕ). Çакă ĕнтĕ халăх хуçалăхĕ йенĕпе культурă строителстви, сывлăха сыхлас ĕç, хулари тирпей-йусавлăх йенĕпе тумали ĕçсене пурнăçа кĕрме май парат.

Пренире тухса каланисем пурте Л. С. Спасав йулташ хăйĕн докладĕнче каланисене, бӳджетра палăртнисене ырларĕç. Пленум плана тата бӳджета çирĕплетрĕ.

Л. С. Спасав йулташ хăйĕн докладĕнче, пренире тухса каланă йулташсем те суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Вĕсем суту-илӳ ĕçĕнчи пăсăксемпе çитменлĕхсене кăтартса парса, суту-илӳ ĕçне сывăх вăхăтрах лайăхлатса йама хушрĕç.

АТĂ-ПУШМАК ЙУСАТТАРАС ПИРКИ

Теприн умне атă, ботинкă çĕтĕлсен йе атă-пушмак тĕпĕ хăйпăнса тухма тытăннă пулсан, ăна çийĕнчех йусаттарас ыйту тухса тăрат. Вара ăна вăл атă-пушмак йусама пĕлекен пĕр-пĕр ăстаç патне кайса парат. Тепĕр чухне, вăхăт килсен, хăйĕн ботинкине йе аттине йусаса парасса ăстаç патĕнчех кĕтсе ларат.

Ку ăстаçсем урамрахчĕ ĕлĕк. Вĕсен вырăнĕ Симĕс пасарти хӳмесем çумĕнче йе халăх нумайтарах иртсе çӳрекен пĕр-пĕр урамăн кĕтесĕнчеччĕ.

Иртнĕ çултанпа çак атă-пушмак йусакан уйрăм ăстаççене ертеле пĕрлештерчĕç. Шупашкарти атă-пушмак çĕлекен „Кожупрйаж" ертелĕ йатарласа маçтерскойсем уçса пачĕ.

Пахă ĕç. Атă-пушмак йусаттаракансем тӳрех ертел маçтерскойĕсене пыма тытăнчĕç. Атă-пушмаксене унта уйрăм ăстаççенчен пахалăхлăрах йусаса парасса кĕтрĕç.

Çуркунне ĕнтĕ халĕ. Шыв. Пыльчăк. Атăпа çӳреме питĕ лайăх. Çак вăхăтрах сапăн темĕнле майпа атă тĕпĕ хăйпăнса кайат. Ăна хăвăртрах йусатарасчĕ тетĕп. Аттуна çуса типĕтетĕп те „Кожупрйаж" ертелĕн пĕр-пĕр маçтерскойне йусама кайса паратăп. Укçине те ессĕ малтанах тӳлесе хăваратăп. Ун чухне вĕсем тата сана хăвăн атту хăçан хатĕр пулассине те каласа йарĕç.

Çак маçтерскойсенче атă-пушмак йусама илес йĕрке халĕ епĕр каланă пек пулса пырат.

Вăл пултăр-ха. Савăн йусама панă аттуна илме кайас вăхăт çитрĕ. Кайатăп. Атă хатĕр мар. Тепрер кунтан каллех пырса пăхатăн. Çавăн пек вара хăвăрт йусама панă аттуна илме ик-виçĕ хут çитмелле пулат.

Атă аван ĕнтĕ. Шыв кĕмĕ. Анчах... атту пĕр куп та çӳреме чăтаймарĕ, кĕлли келлех тăпăлса тухрĕ.

Епĕр кунта атă-пушмак йусакан ертел маçтерскойĕсенче атă-пушмак йусас пахалăх çине çийелтен пăхни çинчен каласшăн. Вĕсем патне атă, ботинкă йусама йе калуш çыпăçтарма пар, пурĕ-пĕр, йусанин чăтăмлăхĕ сахал. Пĕрер куп тăхăнса çӳресен, ку атă-пушмаксене тепрер кунтан каллех маçтерскойне кайса памала килсе тухат.

Ку мĕнтен килсе тухни те паллă. Вăл маçтерскойсенче атă-пушмаксене мĕнле йусанипе тата йусанă атă-пушмаксен пахалăхне никам та тĕрĕслемест. Йусанă атă-пушмак тӳрех хăвăн аллуна пырса кĕрет. Çавăнпа пирĕн шутпа çапла тумала: маçтерской малтан лĕççе панă атă-пушмака йусатăр, вара унăн пахалăхне кура ĕçукçи тата тавар хакне шутласа илсе йултăр.

Атă-пушмак йусакан маçтерскойсенче атă-пушмак йусаттарма пыракансене кĕтсе илме пĕлни те сахал.

Атă-пушмак çĕтĕлчĕ пулсан, ăна йусакан маçтерскойсем кирлĕ. Вĕсем пур. Апла пулсан, вĕсенчен атă-пушмак йусанин пахалăхне ыйтатпăр.

ИВ. МОÇЕЙЕВ.

Çуркунне

Март уйăхĕн виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче çуркунне пуçланчĕ. Çав вăхăтра çанталăк ăшă тăнă май, йур вăйлăн ирĕлчĕ. Апрел уйăхĕн пуçламĕшĕнче çанталăк сивĕтрĕ, çапла вара йур йерипен ирĕлчĕ. Апрел уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пĕтĕм Чăваш республикĕнче вăйлă çил пулчĕ тата йур çурĕ. Шупашкарти метеорологи станци кăтартнă тăрăх, çав вăхăтра сывлăшри температурă 10,3 градус сивĕ, уйрăм кунсенче 1 градусран пуçласа 2 градуса çитиччен ăшă тăнă.

Апрелĕн 5—6-мĕшĕнчен çанталăк хытă улшăнат. Çил-тăмансем чарăнаççĕ, вĕсем вырăнне çăмăрсем çăваççĕ, вăйлă çил тăрат. Çанталăк пĕлĕтлĕ. Сывлăшри температурă ӳсет, уйрăм кунсенче 4,3 градус ăшă тăрат. Йур каллех хăвăртăн ирĕлме тытăнат, çавăнпа пĕрлех çăмăр çунипе йур вăйлăн пĕтсе пырат. Апрелĕн 8-мĕшĕ тĕлне сăртлă вырăнсенче пур çĕрте те йур ирĕлсе пĕтнĕ. Тӳрем вырăнсенче йур хулăмăшĕ 10 сантиметртан пуçласа 12 сантиметра çитиччен тăрат тата йур шывланса çитнĕ, уйрăм вырăнсенче тăпра тухнă.

Йур ирĕлсе пынă май, йур шывĕ çĕре 20 сантиметр таран сăхса кĕнĕ, 10—20 сантиметр çĕр айĕнче 0,0—0,1 градус ăшă тăрат.

Шупашкарти метеорологи станци кăтартăвĕ тăрăх, кĕрхи тырăсем—ыраш, çавăн пекех тата тулă калчисем йур айĕнчен лайăх тухаççĕ.

Малашне те çанталăк ăшăтса пырсан апрел уйăхĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче йур пĕтĕмпех ирĕлсе пĕтет, вара çуркуннехи йалхуçалăх ĕçĕсене тума пуçламала.

Куçмин.

Хастарлă тимĕрç

ЙЕЛЧĔК. Патрекелĕнчи „Осоавиахим" колхоз членĕ Михаил Каринкин 29 çул хушши тимĕрç пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне питĕ тĕплĕ те вăхăтра туса пырат. 1937 çулта ĕç нормине 150 процент тултарса 812 ĕçкунĕ тунă, Кăçал йалхуçалăх машинĕсене пĕтемпех йусаса çитерчĕ. Колхоз ăна çакăн пек ĕçленĕшĕн темиçе хут та премиленĕ.

Пав. Воронцов.

Турăсăрсен йачейки ĕçлет

Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн Шупашкарти педучилищĕри йачейкинче 362 çын тăраççĕ.

Йачейкă тĕне хирĕçле пропагандăна сарсах пырат. Тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци тăвакансене хатĕрлеме икĕ кружок уçрĕç. Пĕр кружокĕнче 28 çын, тепринче 24 çын вĕренеççĕ. Хальхи вăхăтра кружоксенче тĕне хирĕçле пропагандăн задачисемпе метăчĕсем çинчен вĕренеççĕ. **Ф. Тимофейĕв.**

„Чăваш Коммунĕ" хаçат корреспонденчĕсене

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийе ĕçйалкорсем хаçатра пичетленнĕ статйасемшĕн гонорар ыйтса çырусем нумай çыраççĕ. Анчах чылай автăрсен тĕплĕ адресĕ çук пирки издателства кантурĕ гонорар укçине куçарса параймаст. Çавăнпа пĕтĕм ĕçйалкорсене хăйсен йатне, ашшĕ йатне, хушаматне, йал, йалсовет, район йачĕсене тата пуштă уйрăмне тĕплĕн пĕлтерме ыйтатпăр.

Адрĕссене илсенех, гонорар укçине куçарса паратпăр. Малашне кашни çырурах адреса тĕплĕн çырса пĕлтерме ыйтатпăр.

Редакци.

Атăл çинче

АПРЕЛĔН 10-МĔШĔНЧЕ, АТĂЛ ПĂРĔ ВИÇÇĔМĔШ ХУТ ТАПРАНСА ЙУХРĔ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

БИБЛИОГРАФИ

Ивникăн çĕнĕ сăввисем*)

Пирĕн литератăрсем хушшинче çакнашкал йăла пур: çамрăк писатĕл йе çамрăк сăвăç лайăх йапала çырса кăларсан, ăна кун çинчен куçăн калама шикленерех тăраççĕ. Пăсăлма пултарат, теççĕ пĕрисем. Тем пулас-килес, малала сăнаса пăхăр-ха, теççĕ теприсем. Пуçласа пĕрремĕш сăмах калама никам та хăйулăх тупаймаст.

Пирĕн тăван çĕршывра тӳрĕ кăмăлпа таса чĕререн ĕçлекен çынна хисеплеççĕ. Лайăх ăстаçăсем çинчен хаçатра çыраççĕ, унăн ĕç опычĕсемпе пĕтĕм халăха паллаштараççĕ. Кунта шикленсе, йе тем пулас-килесрен сыхланса тăни çук. Тӳрĕ ĕç çинчен тӳрĕ калаçу.

Çамрăк сăвăç Иван Ивник кăçал çĕнĕ, лайăх сăвă кĕнеки пичетлесе кăларчĕ. Кĕнеке пысăк мар, кунта пĕтĕмпе те 56 страницă çеç. Анчах çак пĕчĕк кĕнекене Ивникăн малтанхи чылай хулăн „Çуркуннийĕпе" танаштарса пăхсан, епĕр поет ӳснипе, унăл тавракурăмĕ сарăлнине, пултарулăхĕ пуйанланса пынине куратпăр. „Çуркуннери" нумай сăвăсем пӳлĕмре ларакан сăвăç çырнă пек туйăнаççĕ. Унтан Ивник сăнласа панă поет тĕнче кĕввине пӳртре чавсипе сĕтел çине тайăнса итлет. („Сăвăç каçĕ").

Çĕнĕ кĕнекере тĕнче талккишĕ анлăн сарăлат. Поет пӳлĕмрен урама, уй-хире тухат, паттăр вĕçевçĕсемпе пĕрле сывлăша çĕкленет, унăн сасси çирĕпленет, хăйне-хăй вăл хăйулăнрах туйма пуçлат.

Кунçул—кăвар, пĕлетĕр хăвăр,
Хĕрӳ кунçул сават мана.
Кунçул—кĕвви халь пирĕн сăвă,
Кунçул йурри халь пирĕн сăвă,
Пĕлмешкĕн тивĕç ес ăна.

Ивникăн сăввисене пирĕн вăхăтри паттăрсем—вĕçевçĕсем, бригадирсем, стахановецсем, хĕрлĕ командирсем кĕреççĕ. Сăвăç вĕсемпе пĕрле кунçул кĕввине йурлат. Йурăсенче паттăрсем Октăбĕр йалавне мухтавлаççĕ, аслă çулпуç Сталин йулташа лайăх пурнăçшăн тавтăваççĕ, çĕршыври халăхсен тăванлăхне чыслаççĕ, тăван çĕршыва чĕререн йуратни çинчен калаççĕ. Кĕнекери 19 йапаларан вуннăшĕ—йурă. „Хĕвелĕмĕр Сталин". „Ăшă салам" йатлă йурăсемшĕн Ивник иртнĕ кĕркунне пулса иртнĕ конкурсра иккĕмĕшпе виççĕмĕш премисем илнĕ.

Чăн та, ку йурăсем уйрăмах усă, илемлĕ, йанравлă. Вĕсенче совет çыннин тулли хаваслă кăмăлне сывăх та ăшă сăмахсемпе каласа панă.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Йурлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр йурă,
Йурă кайтăр йан та йан.

„Ăшă салам"—халăх йурринчен тунă сăвă. Колхозник улма-чăпар утне выльатса Мускава пырса кĕрет. Уншăн çак аслă хула—имĕнпе танаштарми хаклă.

Сӳнми ĕмĕт пекехçке йалтăрса
Кремĕл çинче çунаççĕ çăлтăрсем.

Колхозник Хĕрлĕ площчĕте çитет, мавзолейа кĕрет, аслă Ленин атте çине пăхат. Шухăшĕсем унăн аслă Кремĕлре, вăл Сталин патне кĕрсе тухат, çулпуçне колхозниксенчен салам калат, унтан Сталин йанă чи ăшă саламра колхоза таврăнат. Йурăра поет пулас вăхăт çинчен, пурнăçланас ĕмĕт çинчен каланă пек калат, анчах епĕр йурланă чух хамăр та йурăри геройпа пĕрлех çӳретпĕр.

Хумханса, чĕререн кăмăлласа вулатăн „Амăшĕ" йатлă сăвва. Çĕршывра граждăн вăрçи. Амăшĕ ывăлне шуррисемпе çапăçма ăсатат. Ывăлĕ хĕрлĕ партизан, çеçенхир варринче паттăрла вилĕмпе вилет.

Вată карчăк кашни çул,
Чечеке ларсассăн сат,
Кĕтет ывăлне,
Анчах ывăл килес çук...
Киленеймĕ тек пăхса
Карчăк ун çине...

Анчах карчăк хурлă мар,
Вăл мăнаçлă, вăл хастар,
Вăл çапла пуплет:
Тепĕр хут килсен тăшман,
Çак кунçулшăн çапăçма
Хам та кайăп, тет.

Пирĕн совет халăхĕ, кашни совет çынни тăван çĕршыва тăшман тапăнма пăхсан, тăшмана хирĕç çапма йаланах хатĕр тăрат.

Кĕнекере лайăх, тикĕс сăвăласа çырнă йумах пур. Халăх пултарулăхĕ Ивнике чĕрĕ вăй-хăват парат. Поетăн сăввисем куллен пуйанланса пыни, вăл, чи малтан, поет халăх пултарулăхĕпе çыхăнса ĕçленине кăтартат.

Лайăх сăвăсем хушшинче сайра-хутран такăнакан йĕркесем („ик хурçă жнейкă хурçă саслăн") тата „Вырмара" йышши витĕмсĕр сăвă пĕр-иккĕ пурри, кăштах пăшăрхантарат.

Ивникран лайăхран-лайăх сăвăсем ыйтас килет. Кăна тума унăн пултарулăхĕ çителĕклĕ.

АРК. ĔÇХĔЛ.

*) Иван Ивник, „Çĕнĕ сăвăсем". Чăвашсен государствă издателстви, 1938 çул.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 11-мĕшĕнче
Чăвашла çпектакль
П. Н. ОÇИПАВ

„АЙДАР"

(5 пайлă, прологлă)
Аслă режиççор
К. И. ИВАНОВ
тата режиççор
Н. С. АЙЗМАН лартаççĕ.
Художник
Йе. Н. САПОЖНИКАВ.
Спектакльре музыкăна
Государствă филармонийĕ выльат.
Дирижор—Г. ЙЕГОРАВ.
Талон № 161.
Абонемент № 7 талон № 15.
Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă.
Çпектакль каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 183. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. 6. 85—94 см. 1—1 п. л.